Чебоксарская
Ц. Б. им. Горького

Пӗр №-рӗ 10 пус. 19-мӗш ҫул тухать.

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1937 октябӗр 27 йункун 247 (4759)-мӗш №

Чӑваш Коммунӗ

ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Тӗпӗҫтӑвкомӗн хаҫачӗ

Редакципе кантур адресӗ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактӑрӑн 0—67
Ред. заместителӗн 0—88
Редакци секретарӗн 4—40
Дежурнӑйӑн 6—23

Октябӗрӗн 25-мӗшӗнче Чӑваш республикӗн шултӑра предприйатийӗсенче тата малта пыракан колховӗсенче рабочисен, инженерсен тата служӑщисен, колхозниксен суйлав умӗнхи пухувӗсем пулса иртрӗҫ.

Рабочисемпе служӑщисен тата колхозниксен суйлав умӗнхи пухувӗсем халӑхсен ҫулпуҫне, ӗҫсыннисен учителӗпе тусне

ИОСИФ ВИССАРИОНОВИЧ СТАЛИНА

Националҗнӑҫсен Советне депутата суйлама кандидата тӑратрӗҫ.

Пысӑк хаваслӑхпа, хӑватлӑ ҫӗкленӳпе

Республикӑн шултӑра предприйатийӗсенче — Канашри вагонсем йусакан заводра, Улатӑрти паровозсем йусакан заводра, Ҫӗмӗрле комбинатӗнче, „Большевик“ заводра, Куславкка комбинатӗнче, Шупашкарти кирпӗч заводӗнче т. ыт. те; малта пыракан колхозсенче — Колҗцовкӑри Сталин йачӗпе тӑракан колхозра, Ишекри Сталин йачӗпе тӑракан колхозра, Йетӗрне районӗнчи „Крестьянская газета“ колхозра октябӗрӗн 25-мӗшӗнче пысӑк йышлӑ пухусем пулса иртрӗҫ. Рабочисем, инженерсем тата служӑщисем, колхозсенче колхозниксем ҫав суйлав умӗнхи пухусенче „ССР Союзӗн Аслӑ Советне суйламали Положени“ тӑрӑх, Националҗнӑҫсен Советне депутата суйлама кандидатсем палӑртрӗҫ.

Пурте пӗлеҫҫӗ, Сталинла Конституци тӑрӑх Чӑваш республикӗнчен Националҗнӑҫсен Советне 11 депутат суйламала. Ҫавна май Чӑваш республикӗнчен Националҗнӑҫсен Советне суйлама 11 суйлав округӗ тунӑ. Вӗсемсӗр пуҫне РСФС Республикӗнчен Националҗнӑҫсен Советне суйлама тунӑ Горький суйлав округӗ пур. Ку суйлав округне Горький облӑҫӗпе Чӑваш республикӗ кӗреҫҫӗ. Ҫӳлерех асӑннӑ пухусем Горький суйлав округӗ тӑрӑх Националҗнӑҫсен Советне депутата суйламали кандидатсене сӳтсе-йаврӗҫ.

Фабрик-заводсенчи пухусем, ҫавӑн пекех колхозсенчи пухусем те калама ҫук пысӑк хаваслӑхпа, пит те хӑватлӑ ҫӗкленӳпе иртрӗҫ. Вӗсем массӑсен ҫирӗп пӗрлӗхне, революцилӗ пӗтӗҫӳлӗхне, Ленин—Сталин партийӗн ӗҫӗшӗн пӗтӗм чӗререн тӑрӑшса кӗрешнине кӑтартса паракан вӑйлӑ манифестаци пулса тӑчӗҫ.

Горький суйлав округӗ тӑрӑх Националҗнӑҫсен Советне депутата суйлама пухусем тӑратнӑ кандидатсем: совет халӑхне телейлӗ пурнӑҫа илсе ҫитернӗ Иосиф Виссарионович Сталин тата Ленин—Сталин партийӗ пӑхса ҫитӗнтернӗ, тӗнче тӳпи урлӑ — Ҫурҫӗр полюҫӗ урлӑ — Мускавран Америкӑна сывлӑш ҫулӗ хурса тухнӑ Чкалов Валерий Павлович.

Шултӑра предприйатисенчи рабочи коллективӗсен тата малта пыракан колхозсенчи колхозниксен ҫулӑмлӑ сӑмахӗсем пӗтӗм чӑваш халӑхӗн шухӑшне палӑртса тӑраҫҫӗ.

Пур пухусенче те оратӑрсем пурте Сталин йулташ ҫинчен калаҫҫӗ. Рабочисем, инженерсем, колхозниксем хӑйсен пурнӑҫӗ ҫинчен каланӑ сӑмахсем, вӗсем Сталин йулташ ҫинчен каланӑ сӑмахсем. Мӗншӗн тесен Сталин йулташ кашнин чӗрине кӗрсе вырнаҫнӑ. Сталин йулташӑн йачӗ кашнинех ҫӗнтерӳрен ҫӗнтерӳ патне хавхалантарать.

Акӑ, икӗ пичӗ те паллӑ тӗслӗх. Канашри вагонсем йусакан заводри маҫтӑр Лавриненко ӗлӗкхи асапла та пусмӑрлӑ пурнӑҫа курса тӳснӗ ҫын. Вӑл калать: „Епӗ патша саманинче Смоленскӑра ӗҫлерӗм. Ун чухне епӗ 15 ҫул ҫине кайнӑ ачамкӑ пулнӑ. Ҫитӗннӗ рабочисем талӑкне 16-шер сехет ӗҫлетчӗҫ. Епӗр, ҫамрӑк ачасем, 10-шер сехет ӗҫлеттӗмӗр. Унсӑр пуҫне пире тата икӗ сехет хушши „ҫӑмӑл“ ӗҫ тутарттаратчӗҫ. Мӗнле ҫӑмӑл ӗҫ-ха? Ҫав 14—15 ҫулхи ачасене 3—4 пӑт туртакан йешчӗксем ҫӗклеттеретчӗҫ. Халҗхи ҫамрӑксем ҫав ылханлӑ пурнӑҫа пӗлмеҫҫӗ. Вӗсем телейлӗ ӳсеҫҫӗ. Вӗсен пур ӗҫре те ҫул уҫӑ: вӗренме те, ӗҫлеме те. Ҫав телейлӗ пурнӑҫа пире Ленин—Сталин партийӗ, Сталин йулташ пачӗ“.

Електро-ремонт цехӗн начальникӗ Лҗалин йулташ 29 ҫулта. Вӑл акӑ мӗн калать: „Епӗ Сталин саманинче ӳссе ҫитнӗ ӑруӑн представителӗ. Епӗ халӗ цех начальникӗ. Ӗлӗкхи рабочи ҫамрӑкӗсем ҫавӑн ҫинчен шутлама йе ӗмӗтленме пултарнӑ-и? Ҫук, пултарман. Епӗр совет ҫӗршывӗнче пурӑнатпӑр. Ирӗклӗн сывлатпӑр. Сталин йулташ пирӗншӗн тӑрӑшать. Епӗр вӑл тӑрӑшнине кашни утӑмрах туйатпӑр, кашни утӑмрах куратпӑр. Кам пирӗн ҫӗршыва ҫӗнтерӳрен ҫӗнтерӳве илсе пырать? Сталин! Кам пире телейлӗ пурнӑҫ пачӗ? Сталин!“.

Ленин—Сталин партийӗ, Сталин йулташ йертсе пынипе совет халӑхӗсем социалисӑмлӑ ҫӗршыв туса хучӗҫ. Партипе правителствӑ руководителӗсем ҫӗнӗ ҫынсене, паттӑрсене, хӑйулӑ ҫынсене, революци ӗҫӗшӗн хӑйсен пурнӑҫне шеллемесӗр кӗрешме хатӗр тӑракан ҫынсене вӗрентсе ҫитӗнтерчӗҫ. Вӗсенчен пӗри—Совет Союзӗн геройӗ Чкалов Валерий Павлович. Кам пӗлмест пулӗ унӑн мухтавлӑ йатне? Пӗтӗм Совет ҫӗршывӗ пӗлет, пӗтӗм тӗнче пӗлет. Вӑл хӑйӗн паттӑр та хӑйулӑ вӗҫевӗсемпе аслӑ Совет Союзне пӗтӗм тӗнчипе мухтава кӑларчӗ.

Рабочисем, инженерсем, служӑщисем, колхозниксем хӑйсен пӗрремӗш кандидачӗсен йатне каласа пачӗҫ. Партире тӑман рабочисем, служӑщисем, инженерсем тата колхозниксем коммунисемпе ҫирӗп союзлӑ пулса, Горький суйлав округӗ тӑрӑх Националҗнӑҫсен Советне депутата суйламали пӗрремӗш кандидатсене палӑртрӗҫ ӗнтӗ.

Пӗрремӗш кандидат Сталин йулташ! Чӑваш халӑхӗшӗн калама ҫук пысӑк чыс. Вӑл чӑваш ӗҫсыннисен чӗрисене вӗҫи-хӗррисӗр савӑнӑҫ кӳрет, пӗтӗм кӑмӑлне ҫӗклентерсе йарать. Ахалтен мар ӗнтӗ, Канашри вагонсем йусакан заводри рабочисен, инженерсен тата служӑщисен пухувӗнче ватӑ рабочи-стахановец Фомин Сталин йулташ кандидатурине сӗнсе, хӑйӗн сӑмахне ҫапла пӗтерчӗ:

— Епӗ хамӑн плана 175—200 процент тултарса пыратӑп. Стахановла йухӑма анлӑрах сарса йарса, суйлав кунне ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсемпе кӗтсе илме чӗнетӗп.

Ҫав чӗнӳве вагонсем йусакан заводри рабочисем кӑна мар, ытти заводсенчи рабочисем те, колхозниксем те, совхоз рабочийӗсем те хапӑл туса, ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума ҫӗкленеҫ.

ССР Союзӗн Аслӑ Советне суйлас кун тӗлне ҫулталӑк программине тултарар!—Ҫапла ӗнтӗ малта пыракан предприйатисен лозунгӗ.

ССР Союзӗн Аслӑ Советне суйлас кун тӗлне йалхуҫалахӗнчи мӗн пур ӗҫсене туса пӗтерер, ҫитес ҫуракине хатӗрленсе ҫитер!—Ҫапла ӗнтӗ малта пыракан колхозсен лозунгӗ.

Канашри вагонсем йусакан заводпа строителствӑра

Канашри вагонсем йусакан заводри тата строителствӑри рабочисем, инженерсем, служӑщисем—пӗтӗмпе 700 ҫынна йахӑн—октябӗрӗн 25-мӗшӗнче хӑйсен пысӑк та ҫутӑ клубне пухува пухӑнчӗҫ.

Кун йеркинче пӗр ыйту: Канашра вагонсем йусакан заводпа строителствӑри рабочисен, инженерсен тата служӑщисен йачӗпе Горький суйлав округӗ тӑрӑх Националҗнӑҫсен Советне депутата суйлама кандидат тӑратасси.

Доклад пулмарӗ. Суйлав умӗнхи пуху хӑйӗн ӗҫне тӳрех сӗнӳрен тытӑнчӗ. Партире тӑман ватӑ рабочи, стахановец-тимӗрҫ Фомин сӑмах ыйтса илчӗ. Вӑл хӑйӗн сӑмахне васкамасӑр, анчах мӑлатукпа ҫапнӑ пек витӗмлӗн те хӗрӳлӗн калать.

— Манӑн чи малтанхи сӑмах,—тет Фомин йулташ,—болҗшевиксен партийӗ ҫинчен, пирӗн йуратнӑ ҫулпуҫ ҫинчен, пире телейлӗ пурнӑҫ туса панӑ Сталин йулташ ҫинчен пулать. Ленин—Сталин партийӗ йертсе пынипе епӗр социалисӑм туса хутӑмӑр. Пирӗн куҫ умӗнчех ҫӗнӗ заводсемпе фабриксем, ҫӗнӗ хуласемпе поҫолкӑсем, ҫӗнӗ шкулсемпе клубсем, колхозсемпе совхозсем, ҫӗнӗ ҫынсем ӳссе ҫитӗнчӗҫ. Тӗслӗх илме инҫете кайма кирлӗ мар. Акӑ, епӗр халӗ пысӑк та ҫутӑ клубра ларатпӑр. Ҫак вырӑнта виҫӗ ҫул кайарах кӑна вӗт пушӑ уйхир пулнӑ. Ҫав пушӑ вырӑнта виҫӗ ҫул хушшинче пысӑк завод, ҫӗнӗ хула туса лартрӑмӑр. Ӗлӗк, пусмӑр саманинче, рабочисем талӑкне 14—16 сехет ӗҫленӗ. Ҫапах та тутӑ пурӑнайман, ҫи-пуҫне тумланайман, вӗҫӗмсӗр нушапа асап айӗнче пурӑннӑ. Мӗншӗн тесен рабочи клас ӗҫлесе тунӑ пурлӑха капиталиссен пӗчӗк ушкӑнӗ тытса тӑнӑ. Рабочисен хӑйсен ӗҫ аллисемсӗр пуҫне урӑх нимӗн те пулман. Халӗ епӗр талӑкне 7 сехет ӗҫлетпӗр. Ытти вӑхӑт каннӑ ҫӗре, вӗреннӗ ҫӗре, кулҗтурлӑха хӑпартса пынӑ ҫӗре кайать. Пирӗн ачасем савӑнса вӗренеҫҫӗ, тӗрлӗ специалиссем пулса тухаҫҫӗ. Ачасем ҫине пӑхатпӑр та савӑнатпӑр.

— Епӗр ирӗклӗ ҫӗршывра ирӗклӗ пурнатпӑр. Пирӗн чи демократилӗ Конституци пур. Ҫав Конституци тӑрӑх епӗр халӗ ССР Союзӗн Аслӑ Советне суйлама хатӗрленетпӗр. Пирӗн пайан Горький суйлав округӗ тӑрӑх Националҗнӑҫсен Советне депутата суйлама кандидат тӑратмала. Епӗ хам йенчен пире телейлӗ пурнӑҫ туса панӑ, пире ҫӗнӗ Конституци панӑ, пире коммунисӑм патне хӑйулӑн илсе пыракан Сталин йулташа сӗнетӗп.

Пухува пынӑ пӗтӗм халӑх тӑвӑллӑн алӑ ҫупса йарать.

Йулашкинчен Фомин йулташ ҫапла калать: епӗ хамӑн плана 175—200 процент тултарса пыратӑп. Стахановла йухӑма анлӑрах сарса йарса, суйлав кунне ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсемпе кӗтсе илме чӗнетӗп.

Залӑра каллех алӑ ҫупни йанӑраса кайать.

Кун хыҫҫӑн рабочисем, маҫтӑрсем, инженерсем трибуна ҫине тухаҫҫӗ. Вӗсем пурте Фомин йулташӑн сӗнӗвне ырлани ҫинчен каласа параҫҫӗ.

— Епӗр суйлав кунӗ патне ытларах та ытларах ҫывхарса пыратпӑр,—тет газосварщик Кузьмин йулташ.—Епӗр халӗ кандидатсене сӳтсе-йаватпӑр. Чере тулли савӑнӑҫпа сӳтсе-йаватпӑр. Аслӑ Совета чи лайӑххисенчен лайӑххисене суйласшӑн тӑрӑшатпӑр. Ҫапла пулмала та. Аслӑ Совета, хамӑр суйланӑ депутатсене пӗтӗм хамӑрӑн пурнӑҫа шанса паратпӑр.

— Йулташсем! — тет малала Кузьмин.—Ҫавӑрӑнса пӑхӑр Испани ҫине, ҫавӑрӑнса пӑхӑр Китай ҫине. Германипе Итали фашисӑмӗн бомбовозӗсем Испани хулисене тата йалӗсене вутпа ҫунтарса кӗл тӑваҫҫӗ, мирлӗ халӑха йун айне пытараҫҫӗ. Йапони бомбовозӗсем, карапӗсем Китай ҫӗршывне вутпа ҫунтараҫҫӗ. Халӑх тӑшманӗсем—троцкиссем, бухаринцӑсем, буржуалӑ националиссем—фашисӑм йыттисем пирӗн совет ҫӗршывне ҫавӑн пекех йун айне тӑвасшӑн пулчӗҫ. Совет халӑхӗ ҫав ирсӗр сутӑнчӑксен йуллӑ ӗмӗчӗсене ҫапса салатрӗ. Тӑшмансене каҫару ҫук. Вилӗм тӑшмансене. Епӗр хамӑрӑн аслӑ ҫӗнтерӳсене никама та, нимӗнле тӑшмана та парас ҫук.

— Пирӗн совет ҫӗршывӗ чулту пек ҫирӗп. Пирӗн совет халӑхӗ Ленин—Сталин партийӗ тавра, тӑван правителствӑ тавра нихҫанхинчен те ҫирӗп пӗрлешсе тӑрать. Мускаври, Ленинградри, Горькири т. ыт. хуласенчи рабочи коллективӗсем Сталин йулташа Аслӑ Совета депутата суйлама кандидата тӑратаҫҫӗ. Епӗр ҫав рабочи коллективӗсене хӗрӳлӗн саламласа, хамӑр сасса вӗсен сассипе пӗрлештеретпӗр.

Канашри вагонсем йусакан заводпа строителствӑри рабочисен, инженерсен тата служӑщисен пӗрлехи пухувӗ ҫапла йышӑнчӗ:

Горький суйлав округӗ тӑрӑх ССР Союз Аслӑ Совечӗн Националҗнӑҫсен Советне депутата суйлама Канашри вагонсем йусакан заводпа строителствӑри рабочисенчен, инженерсенчен тата служӑщисенчен халӑхсен ҫулпуҫне Иосиф Виссарионович Сталина кандидата тӑратса, унран Горький суйлав округӗ тӑрӑх Националҗнӑҫсен Советне депутата баллотировкӑ тумашкӑн килӗшме ыйтас.

Авиахим йачӗпе тӑракан завод коллективӗ Союз Советне депутата суйлама Мехлис йулташ кандидатурине тӑратать

Мускаври Авиахим йачӗпе тӑракан заводӑн питӗ пысӑк цехӗсенчен пӗрине октябӗрӗн 23-мӗшӗнче хӑватлӑ совет самолҗочӗсем тӑвакансен нумай пинлӗ коллективӗ пуҫтарӑннӑ. Рабочисем, инженерсем, техниксем тата служӑщисем Союз Советне кандидатурӑсем уйӑрма суйлав пухуне пынӑ.

Чи малтанах партире тӑман слесӑр стахановец Крикунов йулташ тухса калать. Вӑл, коммунисла парти тата унӑн аслӑ ҫулпуҫӗ Сталин йулташ йертсе пынипе пирӗн ҫӗршыв ҫӗнсе илнӗ пысӑкрап та пысӑк ҫӗнтерӳсем ҫинчен калать. Крикунов йулташ болҗшевикла пичетӗн ролӗ ҫинчен уйрӑмӑн чарӑнса тӑрать.

— Пирӗн коммунисла партине,—тет вӑл,—болҗшевикла пичет калама ҫук пысӑк пулӑшу нарать. „Правда“—ПСК(б)П Тӗпкомӗн органӗ—патша йӗркк пичет ирӗклӗхне путарса тӑнӑ вӑхӑтра вӑрттӑн ҫуралса тухнӑ. Нумай ҫулсем хушши ӗнтӗ „Правда“ болҗшевикла агитатӑр, пропагандис тата организатӑр пулса тӑрать.

Крикунов йулташ Союз Советне депутата суйлама чи ҫирӗп болҗшевиксенчен пӗрине—„Правда“ хаҫат редакторне Лев Захарович Мехлиса кандидата тӑратма панӑ сӗнӳве пуху алӑ ҫупса йышӑнать.

Крикунов йулташ ҫапла калать:

— Мехлис йулташ граждан вӑрҫин фрончӗсенче активлӑн кӗрешнӗ, уншӑн ӑна Хӗрлӗ йалав орденӗпе наградӑланӑ. „Правда“ хаҫатра ӗҫлесе, вӑл рабочи класӑн пур йышши тӑшманӗсемпе пӗр хӗрхенӳсӗр кӗрешет. „Правда“ сиремпилӗк ҫул тултарнӑ кун Мехлис йулташа Ленин орденӗпе нагвадӑланӑ.

Ҫавӑн пекех тата пухура инженер Резников, ватӑ рабочи Дерӳкин йулташ, партком секретарӗ Шакурин йулташ тата комсомол организацин представителӗ Сылайӗв йулташ тухса каланӑ. Вӗсем пурте Союз Советне депутата суйлама тӑратнӑ Мехлис йулташ кандидатурине хапӑл тӑваҫҫӗ.

Пурте пӗр сасӑпа йышӑннӑ резолюцийӗре пуху Авиахим йачӗпе тӑракан заводри рабочисенчен, инженерсенчен, техниксенчен тата служӑщисенчен Октябӗр Суйлав Округӗ тӑрӑх Союз Советне депутата суйлама Мехлис йулташ кандидатурине уйӑрнӑ. Пуху Мехлис йулташран Октябӗр Суйлав Округӗнче баллотировкӑна тӑма килӗшӳ пама ыйтнӑ.

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ

Октябӗрӗн 23-мӗшӗнче Испанин оборонӑ министерстви фашиссем Хихона туртса илни пирки пӗлтерӳ пичетлесе кӑларнӑ. Пӗлтерӳре ҫурҫӗр фронтӗнче республикӑ ҫарӗсем пит хӑйулӑ пулнине, тӑшмана хирӗҫ хӑйсене хӗрхенмесӗр кӗрешнине палӑртнӑ. Пӗлтерӳре тата республикӑ армин командуйущийӗ полковник Прада Хихонран вуникӗ пин бойеца илсе тухма пултарнине палӑртнӑ. Испани республикин Хихонра пулнӑ миноносцине тата шыв айӗн ҫӳрекен киммине, фашиссен аллине ан лекчӗр тесе, путарса хӑварнӑ. Вӗсен екипажӗсем суднӑсем ҫинчен йулашки минутра тин тухнӑ. Ҫурҫӗр фронтӗнчи ҫӗр ҫинчи, тинӗсри тата сывлӑшри ҫар вӑйӗсен руководителӗсем Валенсине кайаҫҫӗ.

Ытти фронтсенче мӗн чухлӗ те пулин паллӑ улшӑнусем пулман. Мадрид фронтӗнче тата Кӑнтӑрти фронтра республикӑ ҫарӗсем тӗмиҫе хут та фашиссен атакисене сире-сире пӑрахнӑ, фашиссене йӑвӑр ҫухатусем тутарнӑ.

(ТАСС).

„Пйатилеткӑ итогӗсем—капиталисӑмлӑ хуҫалӑх системи тӗрексӗррине, вӑл тытӑнса тӑма пултарайманнине,—вӑл ӗнтӗ хӑйӗн пурнӑҫне пурӑнса иртерсе, хӑйӗн вырӑнне урӑх, ҫӳлӗрех, советлӑ социалисӑмлӑ хуҫалӑх системине памалине, кризиссенчен хӑраман, капиталисӑм татсӑ пама пултарайман йӑвӑрлӑхсене ҫӗнтерме пултаракан пӗртенпӗр хуҫалӑх системи вӑл—советлӑ хуҫалӑх системи пулса тӑнине кӑтартса пачӗҫ“.

СТАЛИН, Итоги первой пятилетки, „Вопросы ленинизма“, стр. 512, изд. 10-е.

* * *

ССР Союзӗн халӑх хуҫалӑхӗнче социалисӑмлӑ системӑ пӗр пӗччен пуҫпулса тӑрать

Социалисӑмлӑ хуҫалӑх вырӑнӗ	1928 ҫ.	1936 ҫ.
Халӑх доходӗнче	44,0	99,1
Пӗтӗм промышленнӑҫӑн валовой продукцинче	82,4	99,8
Йалхуҫалӑхӗн валовой продукцинче (колхозниксен хӑйсен хуҫалӑхне те пӗрле илнӗ)	3,3	97,7
Суту-илӳ предприйатисен оборотӗнче (ваккӑн)	76,4	100,0
Халӑх хуҫалӑхӗн производствӑлӑ фонӗсенче	77,8	98,7

Ҫак таблицӑ Сталинла Конституцин 4-мӗш статйине уҫҫӑн та ҫуттӑн кӑтартса тӑрать. Сталинла Конституцин 4-мӗш статйи ҫапла калать: „ССР Союзӗн економикӑлӑ никӗсӗ—хуҫалахӑн капиталисӑмлӑ системине пӗтернипе, производствӑ орудийӗсемпе хатӗрӗсен уйрӑм харпӑрлӑхне пӗтернипе тата ҫынна ҫын експлоатацилессине пӗтернипе ҫирӗпленнӗ хуҫалӑхӑн социалисӑмлӑ системипе производствӑ орудийӗсемпе хатӗрӗсен социалисӑмлӑ харпӑрлӑхӗ пулса тӑрать“.

* * *

ССР Союзӗнчи производствӑлӑ фондсем харпӑрлӑх формисем тӑрӑх

(Итогран процентпа шутласа)

	1928 ҫ. Промышленнӑҫ	1928 ҫ. Йалхуҫалӑхӗ	1928 ҫ. Пӗтӗм халӑх хуҫалӑхӗ	1936 ҫ. Промышленнӑҫ	1936 ҫ. Йалхуҫалӑхӗ	1936 ҫ. Пӗтӗм халӑх хуҫалӑхӗ
1. Социалисӑмлӑ харпӑрлӑх икӗ тӗрли:	97,9	63,6	77,8	99,95	96,3	98,7
а) пӗтӗм халӑх (государствӑ) харпӑрлӑхӗ	96,6	62,6	76,5	97,35	76,0	90,0
б) кооперативлӑ-колхозлӑ, урӑхла каласан уйрӑм колхозсен, кооперативлӑ пӗрлешӳсен харпӑрлӑхӗ	1,3	1,0	1,3	2,6	20,3	8,7
2. Колхозниксен хӑйсен харпӑрлӑхӗ (ку харпӑрлӑхра ҫын ӗҫне експлоатацилесси ҫук, вӑл социалисӑмлӑ колхозлӑ харпӑрлӑх ҫумӗнче хутшӑнулӑ елемент пулса тӑрать)	—	0,1	—	—	3,1	1,1
3. Йединоличник хресченӗн тата кустарӗн хӑй ӗҫленипе тытӑнса тӑракан, пурӑнмали тӗп тупӑш паракан вак харпӑрлӑхӗ	2,0	31,9	19,6	0,05	0,6	0,2
4. Урӑх ҫынна експлоатациленӗ никӗс ҫинче тӑракан шултӑра капиталисӑмлӑ харпӑрлӑх	0,1	4,4	2,6	—	—	—
Пурӗ	100	100	100	100	100	100

Производствӑлӑ фонд шутне кӗртнӗ: йалхуҫалӑх ҫӗрӗсене, усӑ куракан вӑрмансене, производствӑ ҫурчӗсене, сооруженисене тата постройкӑсене, машинсене, оборудованине, производствӑ-транспорт инвентарне, выльӑх-чӗрлӗхсене, ҫӗре ҫемҫетмелисене, чӗр таварсене, хутмалисене, производствӑна кайакан материалсемпе изделисене, вӑрлӑхсене тата выльӑх-чӗрлӗх апачӗсене.

Пурӑнмали тата социаллӑ-кулҗтурӑлӑ ҫуртйӗрӗсене, сооруженисене тата постройкӑсене производствӑлӑ фонда кӗртмен.

* * *

ССР Союзӗнчи халӑхӑн класлӑ составӗ

	1913 ҫ.	1937 ҫ.
	Итогран шутласа процентпа	
Рабочисемпе служӑщисем	16,7	34,7
Вӑл шутран:		
Совхозсемпе МТС рабочисемпе служӑщисем	—	3,2
Колхоз хресченӗсем тата кооперациленӗ кустарсемпе ремесленниксем	—	55,5
Хресчен-йединоличниксем (кулаксемсӗр пуҫне) тата кооперациленмен ӗҫсыннисем, кустарсемпе ремесленниксем	65,1	5,6
Буржуази (помешчиксем, хулари шултӑра тата вак буржуази, торговецсем тата кулаксем)	15,9	—
Вӑл шутра кулаксем	12,3	—
Ытти халӑх (вӗренекенсем, пенсионерсем, ҫар т. ыт. те)	2,3	4,2
Пурӗ	100,0	100,0

* * *

Патша Российӗ Хӗвеланӑҫ Йевропӑри капиталисӑмла государствӑсен ҫурмаколонийӗ пулнӑ

„Царисӑм Йевропӑн хӗвелтухӑҫӗнчи хурал йытти ҫеҫ мар, вӑл тата хӗвеланӑҫӗнчи империалисӑмӑн хӑйне Парижпа Лондӑнра, Берлинпа Брӳҫҫӗлре панӑ займсемшӗн халӑхран ҫӗршер мӗлйунлӑ процентсем тӑпӑлтарса тӑракан агентури пулнӑ“.

СТАЛИН, Об основах ленинизма, „Вопросы ленинизма“, стр. 5, изд. 10-е.

Йутҫӗршывсенчи буржуази патша Российӗнчен займсемшӗн процентсем кӑна ҫуллен 600 мӗлйун тенкӗрен пуҫласа 700 мӗлйун тенке ҫити ылттӑн шӑйӑрса илсе тӑнӑ. Унсӑр пуҫне, йутҫӗршывсенчи буржуази патша Российӗнчен промышленнӑҫ предприйатисене тата банксене хывнӑ капиталшӑн ҫуллене 200 мӗлйун ылттӑн тенкӗрен кайа мар шӑйӑрса илсе тӑнӑ.

Цифӑрлӑ материалсене „Правда“ хаҫатӑн 1937 ҫулхи октябӗрӗн 19-мӗшӗнче тухнӑ номӗрӗнчен илсе пичетлетпӗр.

СОВЕТ ВЛАÇĔ ÇИРĔМ ÇУЛ ХУШШИНЧЕ

Пропагандиссене ваљљи цифăрлă материал

ССР Сойузĕн Государствă План Комиççин халăх хуçалăх учочĕн Тĕп Управленийĕ социалисăмла Аслă револљуци 20 çул тултарнă тĕле „Совет влаçĕ 20 çул хушшинче" йатлă статистикăлă пысăк мар сборник хатĕрленĕ. Ку кĕнеке пропагандиссене ваљљи цифăрлă материал пулса тăрать. Сборникĕн тăхăр пайĕ те пит чаплă, хумхантаракан цифăрсĕнчен тăрать, тата ăнлантарса кĕскен çырнисем те пур.

Сборникри кашни таблицă—рабочисемпе хресченсен социалисăмлă государстви тунă аслă çитĕнӳсене, хуçалăхăн социалисăмлă системи малта тăнине кăтартакан чаплă документ.

Кайа йулнă тата пăхăнса тăнă помешчикле-капиталисăмла Российă — хăватлă, индустрилĕ социалисăмлă державă пулса тăни çинчен сборникре ĕнентермеле те уççăн каласа панă. Çĕршыва социалисăмла индустриализацилени, йалхуçалăхне коллективлани, совет çĕршывĕн транспăрчĕ вăйлă хăпарнин тата совет суту-илӳвĕ пит пысăккăн ӳснин картинне цифăрсем пит уççăн кăтартса параççĕ.

Пирĕн çĕршыври ĕççыннисен пурнăçĕ пурлăх тĕлĕшпе хăпарса пыни çинчен, ĕççыннисен кулљтури хăпарса пыни çинчен калакан страницăсене пысăк интереспа вуласа тухатăн.

Хĕрарăмсем — работницăсем, колхозницăсем, служăщчисем çинчен сборникре йатарласах пĕр пай туса кăларнă. Ку пайра хĕрарăм ирĕке тухни, правасем тĕлĕшĕнчен арçынпа танлашни ĕçре мĕнле пулса пыни çинчен каласа панă.

Сборникĕн вĕçлев пайĕ — Совет Сойузĕ халăхсен аслă туслăхĕн çĕршывĕ, „нумай нацилĕ социалисăмлă государствă" пулса тăнине кăтартса парать, „унăн çирĕплĕхне çутçанталăкăн кирек хăш пайĕнчи кирек хăш нацилĕ государствă та хапсăнма пултарнă пулĕччĕ" (Сталин). Сойузлă республикăсем пурте чечекленсе пынине, вĕсен хуçалăхĕ, вĕсен — формипе нацилĕ, содержанийĕпе социалисăмла кулљтури, пуйан кулљтури ӳссе пыни çинчен цифăрсем пит уççăн кăтартса параççĕ.

Çак пит тĕплĕн редакциленĕ сборнике ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн Партилĕ издательстви пит пысăк тиражпа — 1.000.000 екземпљар кăларать. Ку сборник чăннипех те кашни пропагандисăн тата агитатăрăн алран кайман кĕнеки пулса тăрĕ.

Пайан епĕр çак сборникри тĕп материалсене (хăшпĕрне сборникри пекех, хăшпĕрне кĕскен каласа парса) пичетлесе кăларатпăр.

Хăватлă социалисăмлă индустри тунă

	Продукци—1926/27 ç. хаксемпе (мĕлйардщер тенкĕпе)						1936 ç. продукци айаларах кăтартнă çулсенчи продукцирен миçе хут пысăкрах	
	1913	1917	1920	1928	1932	1936	1913	1917
Пĕтĕм шултра промышленнăç	**11,0**	**6,9**	**1,7**	**16,8**	**38,8**	**80,9**	**7,3**	**11,7**
Производствă средствисене туса кăларни	4,7	3,7	0,9	7,8	21,6	49,1	10,4	13,2
Пурнăçра кирлĕ йапаласем туса кăларни	6,3	3,2	0,8	9,0	17,2	31,8	5,0	10,0

Производствă средствисем туса кăларни ӳсни индустриализаци ӳсĕмне тата пирĕн çĕршыв никама пăхăнмасăр пурнакан пулса çитнине уççăн кăтартса тăрать.

Пĕтĕм шултра промышленнăçăн продукци хисепĕнче производствă средствисем туса кăларни 1913 çулта 42,9%, 1936 çулта—60,8% пулнă.

ССР Сойузĕн индустрине Совет влаçĕ пулнăранпа тунă

ССР Сойузĕн промышленнăç продукцин виçĕ чĕрĕкне Совет влаçĕ çĕнĕрен туса лартнă йе тĕпренех реконструкциленĕ заводсем туса кăлараççĕ.

ÇĔНĔ ЗАВОДСЕМ 1936 ÇУЛТА ТУНĂ ПРОДУКЦИ ÇАВ ОТРĂÇĔЛĔН ПĔТĔМ ПРОДУКЦИ ХИСЕПĔНЧЕН ПРОЦЕНТПА ШУТЛАСАН

Пĕтĕм промышленнăç	75,4
Производствă средствисем туса кăларни	87,4
Пурнăçра кирлĕ йапаласем туса кăларни	55,2
Чипаха отрăçĕлсем тăрăх:	
Електростанцисем	90,8
Хими	95,2
Хура металлурги	96,6
Тĕслĕ металлурги	76.6
Машиностройени	88,3
Станкостройени	93,7
Йалхуçалăх машинĕсем туни	95,3
Вăл шутра трактăрсен производстви	100,0
Автомобилсен производстви	100,0
Йăвăç ĕçлекенни	91,2
Аш-какай	94,3
Консервă	98,5

Чукунçул транспăрчĕн çитĕнĕвĕсем

ССР Сойузĕ—чукунçуллă аслă державă.

1913 çулта Российăра чукунçулсем 58.549 километр тăршшĕ пулнă.

ССР Сойузĕнче 1936 çулта чукунçулсем—85.080 километр тăршшĕ. Чукунçулсен тăршшĕ 1,5 хута пахăнах ӳснĕ.

1913 çулта Российăри чукунçулсем тăрăх 132,4 мĕлйун тоннă груз турттарнă.

ССР Сойузĕнче 1936 çулта чукунçулсем тăрăх 483,2 мĕлйун тоннă груз турттарнă. Вăл 4 хут пахăнах ытларах пулать.

1913 çулта талăкра вăтамран 27,4 пин вагон тийенĕ. 1936 çулта—86,2 пин вагон тийенĕ (ӳсĕм 3 хут ытларах).

1937 çулти тăваттăмĕш кварталта талăкра 100-шер пин вагон тийемеле.

1913 çулта 184,8 мĕлйун пассажир турттарнă, 1936 çулта — 991,6 мĕлйун пассажир турттарнă, вăл 5 хутран та ытларах пулать.

Сойузлă республикăсен индустрийĕ

Совет влаçĕ пулнăранпа производителĕ вăйсене тĕрĕсрех вырнаçтарассине пурнăçа кĕртнĕ тата пур сойузлă республикăсене те индустри йенĕпе хăвăрт аталантарнă. Уйрăм сойузлă республикăсен промышленнăç продукцийĕ 1936 çулта, 1913 çулхипе танлаштарсан, çакăн пек ӳснĕ: РСФСР—7,8 хут, Украйнă ССР—6,9 хут, Белорус ССР—15,9 хут, Азербайджан ССР—5,4 хут, Грузи ССР—18,6 хут, Армйан ССР—12 хут, Туркмен ССР—7,1 хут, Узбек ССР—4,4 хут, Таджик ССР—116 хут, Казах ССР—11,8 хут, Киргиз ССР—95 хут.

Инженерла-техникла работниксен йышĕ ӳссе пыни

Йулашки çулсем хушшинче Совет çĕршывĕнче техникăлă çĕнĕ интеллигенци ӳссе çитĕнчĕ, вăл хăйĕн пĕтĕм тымарĕсемпе рабочи класпа тата хресченсемпе çыхăнса тăрать. 1925 çулта пĕтĕм промышленнăçра инженерлă-техниклă работниксем 62 пин çын пулнă. Пирвайхи пйатилеткă умĕн, 1928 çулта, вĕсен йышĕ 92 пин çынна çитнĕ. Халĕ, 1937 çулта, пирĕн промышленнăçра инженерлă-техниклă работниксем 578 пин çын ĕçлеççĕ.

Апат-çимĕç индустри тунă

Апат-çимĕç хатĕрлекен шултра индустри калама çук пысăккăн ӳсрĕ (тĕрĕссипе каласан, ăна Совет влаçĕ чухне тин тунă). Апат-çимĕç хатĕрлекен шултра промышленнăç хăйех 1936 çулта, 1926-27 çулти хакпа шутласан, 12.895 мĕлйун тенкĕлĕх продукци туса кăларнă, кун пек промышленнăç 1913 çулта 2.960 мĕлйун тенкĕлĕх çеç продукци кăларнă пулнă (ӳсĕм 4,4 хут).

1936 çулта сахăр песокĕ 1913 çулхинчен 1,5 хут ытларах йе 1.998 пин тоннă туса кăларнă (1913 çулта—1.347 пин тоннă тунă), консервсем—1.266 мĕлйун банкă туса кăларнă, 1913 çулта 93 мĕлйун банкă тунă пулнă,—ӳсĕм 13,6 хут.

Кондитер изделисем 1913 çулхинчен 10,9 хут нумайрах, папирос 3,8 хут нумайрах туса кăларнă т. ыт. те.

ССР Сойузĕнче сăкăр савăчĕсем 286 туса лартнă, 1936 çулта мĕн пурĕ пĕçернĕ çăкăртан 29,2 процентне çак заводсем пĕçерсе кăларнă. Совет влаçĕ пулнă хыççăн туса лартнă 24 аш-какай комбиначĕ 1936 çулта пĕтĕм аш-какай промышленнăçĕн продукци хисепĕнчен 33,5 процентне ĕçлесе кăларнă. Патша Российĕнче çăкăр завочĕсем те, аш-какай завочĕсем те пулман.

Хĕрарăм производствăра

Ленин пире çапла вĕрентнĕ: „Пролетариат, хĕрарăма ваљљи тулли ирĕклĕх кĕрешсе илмесĕр, тулли ирĕклĕхе пурнăçа кĕртме пултараймасть", тенĕ.

Хĕрарăмсем економикă тĕлĕшпе ирĕке тухса пыни — хĕрарăмсем производствăна хутшăнса ĕçлени пĕрмайах ӳснинчен аван курăнса тăрать. Пĕтĕм халăх хуçалăхĕнче 1929 çулта хĕрарăмсем—работницăсем тата служăщчисем 3.304 пин çын ĕçленĕ. 1936 çулта вĕсен хисепĕ 8.492 пин çынна çитнĕ. Çапла ĕнтĕ, производствăра ĕçлекен хĕрарăмсен—работницăсен тата служăщчисен пĕтĕм йышĕ 7 çул хушшинче 5.188 пин çын ӳснĕ.

Халăх хуçалăхĕн пĕтĕм отрăçлисенче 1936 çулта ĕçленĕ кашни 100 çынран 34 çын хĕрарăмсем пулнă. Шултра промышленнăçра хĕрарăмсен йышĕ 39 процента çитет, халăха сутă кăларас ĕçре — 56 процента, сывлăх ĕçĕнче 72 процента çитет.

Ĕç укçи

Ĕç тухăçлăхĕ хăвăрт ӳссе пынă никĕс çинче, ĕç укçи те пĕрмайах ӳссе пырать. Пĕтĕм халăх хуçалăхĕнче 1924-25 çулта рабочисемпе служăщчисен çулталăкри вăтам ĕç укçи 450 тенкĕ пулнă, 1936 çулта 2.776 тенке çитнĕ. Çав çулсенчех шултра промышленнăçри рабочисемпе служăщчисен вăтам ĕç укçи 566 тенкĕрен 2.862 тенке çити ӳснĕ.

Ĕçе механизацилени

Совет влаçĕ пулнăранпа 20 çул хушшинче тата уйрăмах сталинла икĕ пйатилеткăсен çулĕсенче ССР Сойузĕнчи рабочи клас пĕтĕмпех çĕнĕ техникă туйанчĕ. 1913 çулта промышленнăçра пĕр сехет ĕçленĕ хушăра 0,8 киловатт-сехет енерги пĕтернĕ, 1936 çулта çак вăхăт хушшинче 2,9 киловатт-сехет енерги пĕтернĕ. Çапла вара промышленнăçри рабочи енергипе усă курни Совет влаçĕ пулнăранпа 3,6 хутран та ытларах ӳснĕ.

Ĕçе механизацилесси мĕнле пулса пынине çак цифăрсем кăтартса тăраççĕ: револљуциччен, 1913 çулта, пĕтĕмпе кăларнă кăмрăкăн механизациленĕ майпа 1,7 процентне кăларнă, 1936 çулта вăл 88 процента çитнĕ. Çав вăхăт хушшинчех механизациленĕ майпа нефть кăларасси 5,9 процентран 98 процента çитнĕ.

ССР Сойузĕн промышленнăçĕ Йевропăра пĕрремĕш вырăна, пĕтĕм тĕнчере иккĕмĕш вырăна тухрĕ

	1913 ç.		1936 ç.	
	Пĕтĕм тĕнчере	Йевропăра	Пĕтĕм тĕнчере	Йевропăра
Пĕтĕм промышленнăç продукцийĕ	5	4	2	1
Машиностройени	4	3	2	1
Йалхуçалăх машиностройени	5	3	2	1
Трактăрсем	Российăра пулман		2	1
Комбайнсем	Российăра пулман		1	1
Автомобилсем	Российăра пулман		6	4
Вăл шутран грузовиксем	Российăра пулман		2	1
Електроенерги	15	7	3	2
Çĕр кăмрăкĕ	6	5	4	3
Тимĕр тăпри	5	4	2	1
Хурçă	5	4	3	2
Пăхăр	7	3	6	1
Алљуминий	Российăра пулман		3	2
Ылтăн	4	1	2	1
Суперфосфат	16	13	3	1
Сахăр-кăшманран	2	2	1	1

Социалисăмла промышленнăçра ĕç тухăçлăхĕ хăпарса пыни

	Пĕр рабочи 1936 çулта продукци туса кăларни (улшăнман хакпа) 1913 çулхипе процентпа танлаштарсан
Пĕтĕм промышленнăç	308,8
Производствă средствисем туни	327,4
Пурнăçра кирлĕ йапаласем туни	267,4
Металл ĕçлекенни	353,7
Хими	286,0
Çĕрмамăкĕнчен тĕртекенни	244,5
Апат-çимĕç	261,8

1936 çулта—стаханăвла йухăмăн пирвайхи çулĕнче—шултра промышленнăçра ĕç тухăçлăхĕ 21 процент ӳснĕ, а йăвăр промышленнăçра, унăн ăшĕнче стаханăвла йухăм çуралнă,—26 процент ӳснĕ.

Социаллă страховани

Социаллă страхованин бӳджечĕ рабочисен тата служăщчисен пурнăçĕ пурлăх йенпе пĕрмайах лайăхланса пынине кăтартакан чи паха паллăсенчен пĕрк пулса тăрать. Пирвайхи пйатилеткăн 4 çулталăкĕнче (1929—1932) социаллă страховани ваљљи 10.083 мĕлйун тенкĕ расхут кăларнă, иккĕмĕш пйатилеткăн 4 çулталăкĕнче (1933—1936) çак расхут 26.462,2 мĕлйун тенке çитнĕ.

Машиностройени

Совет çĕршывĕнче машиностройени ӳссе пыни ССР Сойузĕн халăх хуçалăхĕн пĕтĕм отрăçлисене тĕпренех реконструкцилеме май пачĕ.

1913 çулта машиностройени продукцийĕ (1926-27 ç. хаксемпе шутласан) 748 мĕлйун тенкĕ тăнă. Пĕтĕм шултра промышленнăç продукцийĕ хисепĕнчен илсе шутласан, машиностройени предприйатийĕсен изделийĕсем пурĕ те 6,8 процент çеç пулнă.

Совет çĕршывĕнчи машиностройени 1936 çулта, 1926-27 ç. хаксемпе шутласан, 20.764 мĕлйун тенкĕлĕх продукци туса кăларнă. Вăрçăччен хипе танлаштарсан вăл 28 хут ӳснĕ. Машиностройени продукци 1936 çулта пĕтĕм шултра промышленнăç продукцийĕ хисепĕнчен 25,7 процент пулнă.

Електрофикаци

Совет çĕршывĕнчи електростанцисен вăйĕ 1936 çулта 7,5 мĕлйун киловатта çитнĕ. Ку вăл 1913 çулхипе танлаштарсан 6,8 хут ӳсни пулать, ун чухне електростанцисен вăйĕ пурĕ те 1,1 мĕлйун киловатт çеç пулнă. Совет влаçĕ пуçланнăранпа електроенерги туса кăларни 17,3 хут ӳснĕ: 1913 çулта 1,9 мĕлйард киловатт-сехет пулнă, 1936 çулта 32,8 мĕлйард киловатт-сехете çитнĕ.

1936 çулта Днепровскри Ленин йачĕпе тăракан гидростанци хăйех патша Российĕнче 1913 çулта тунă електроенергинчен нумайрах електроенерги панă.

Российăна електрификацилемели государствă планне (ГОЭЛРО планне),—ăна Ленин тата Сталин пуçарнипе йышăннă,—10—15 çул хушшинче пурнăçа кĕртме тесе тунăскере, йышăннăранпа 15 çул çитнĕ тĕле 2,5 хут йахăнах иргтерсе тултарнă.

Шултăра промышленнăçпа йалхуçалăх продукцийĕ шайлашăнса тăни (процентпа)

	1913 ç.	1937 ç.
Промышленнăç	42,1	77,4
Йалхуçалăхĕ	57,9	22,6
Пурĕ	100,0	100,0

Çак таблицăран револљуциченхи Российă аграрлă çĕршыв пулни курăнса тăрать,—ун чухне йалхуçалăх продукцийĕ промышленнăç продукцинчен ытларах вырăн йышăнса тăнă. Халĕ ССР Сойузĕ индустрилĕ çĕршыв пулса тăчĕ,—ССР Сойузĕнче промышленнăç продукцийĕ йалхуçалăх продукцинчен чылай ытларах вырăн йышăнса тăрать.

Совет çĕршывĕ ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама хатĕрленет. Сталин йачĕпе тăракан Украйнăри промышленнăç академийĕнче (Харьков) çĕнĕ суйлав саккунне вĕренме 22 кружок тунă.

Укерчĕк çинче: 4-мĕш курсра вĕренекенсем кружок занљатийĕнче. Сылтăмра — кружок руководителĕ, депутат группин председателĕ, Дзержински райсовет членĕ Н. Н. Сурин. (Сойузфото).

Кăмрăк

Патша Российĕнче 1913 çулта кăмрăк пурĕ 29,1 мĕлйун тоннă кăларнă, вăл шутран: Донбассра 25,3 мĕлйун тоннă, Кузбассра 800 пин тоннă, Мускав патĕнчи бассейнра 300 пин тоннă.

ССР Сойузĕнче 1936 çулта 126,4 мĕлйун тоннă кăмрăк кăларнă, урăхла каласан, вăл 4,3 хут ытларах. Çав вăхăтрах Донбассра кăмрăк кăларни 3 хут ӳснĕ, Кузнецк бассейнĕнче—22,2 хут, Мускав патĕнчи бассейнра—24 хут.

Металл

1913 çулта чукун 4.216 пин тоннă шăратнă пулсан, 1936 çулта 14.400 пин тоннă шăратнă,—ӳсĕм 3,4 хут.

1913 çулта хурçă 4.231 пин тоннă шăратнă, 1936 çулта 16.400 пин тоннă шăратнă,—ӳсĕм 3,9 хут.

1913 çулта прокат 3.660 пин тоннă тунă, 1936 çулта 12.454 пин тоннă тунă,—ӳсĕм 3,4 хут.

1936 çулта Магнитогорск завочĕ хăйех пĕтĕм Полљшăра шăратса кăларакан чукун хисепĕнчен 2,5 хут нумайрах шăратса кăларнă, Кузнецкри тата Магнитогорскри заводсем пĕрле пĕтĕм Йапонире шăратса кăларнинчен 30 процент нумайрах шăратса кăларнă.

Нефть

1913 çулта нефть 9.234 пин тоннă кăларнă, 1936 çулта—29.293 пин тоннă кăларнă,—ӳсĕм 3,2 хут. Баку районĕнче 1913 çулта 7.669 пин тоннă нефть кăларнă пулсан, 1936 çулта 22.264 пин тоннă кăларнă,—ӳсĕм 2,9 хут.

Совет çĕршывĕнче кăларакан нефтĕн 90 процентне хамăрăн заводсем ĕçлесе тĕрлĕрен продуктăсем кăлараççĕ. Патша Российĕнче кăларнă пĕтĕм нефтрен 62 процентне çеç Российăри заводсенче ĕçлесе продуктăсем тунă. ССР Сойузĕнче бензин туса кăларасси 19,6 хут ӳснĕ, краççин туса кăларасси—3,7 хут ӳснĕ.

Хими

Патша Российĕнче 1913 çулта хими промышленнăçĕ 255 мĕлйун тенкĕлĕх (1926-27 ç. хаксемпе шутласан) продукци панă; ССР Сойузĕнче 1936 çулта хими промышленнăçĕ 3.463 мĕлйун тенкĕлĕх продукци панă,—ӳсĕм 13,6 хут.

ССР Сойузĕнчи кĕкĕрт кислоти туса кăларакан виçĕ завод—Константиновкăри Сталин йачĕпе тăракан завод, Куйбышев йачĕпе тăракан Невски тата Воскресенски заводсем 1936 çулта 353 пин тоннă кĕкĕрт кислоти туса кăларнă, вăл патша Российĕнчи пĕтĕм промышленнăç туса кăларнинчен виçĕ хут нумайрах пулать.

Синтетический каучук тăвакан промышленнăçа пĕтĕмпех çĕнĕрен туса лартнă.

Атă-пушмак

ССР Сойузĕнче атă-пушмак туса кăларасси, 1913 çулхипе танлаштарсан, 19,6 хут ӳснĕ. 1913 çулта 8,3 мĕлйун мăшăр туса кăларнă, 1936 çулта—162,7 мĕлйун мăшăр (йăваласа тунисене ку шута кĕртмен).

Совет çĕршывĕнчи виçĕ чи пысăк предприйатисем — Ленинградра „Скороход", Мускавра „Парижская Коммуна" тата Дон-çи Ростовра Микойан йачĕпе тăракан фабрикă 1936 çулта 30,6 мĕлйун мăшăр атă-пушмак туса кăларнă, вăл 1913 çулта мĕн пур атă-пушмак фабрикĕсем туса кăларнинчен 4 хута йахăнах нумайрах пулать.

Паровозсем тата вагонсем

1913 çулта патша Российĕнче 418 паровоз туса кăларнă („Э" тата „СУ" сери çине куçарса шутласан), 1936 çулта ССР Сойузĕнче 1.696 паровоз туса кăларнă, вăл шутра йăвăр паровозсем („ФД", „СО" тата „ИС") 985 туса кăларнă, тендер-конденсатăрлă паровозсем 53 туса кăларнă.

Тавар тийемели вагонсем 1913 çулта 14,8 пин туса кăларнă (икĕ тĕнеллисем тесе шутласан), 1936 çулта—77,9 пин вагон туса кăларнă.

Халăх хуçалăхне укçа-тенкĕ хывни

Социалисăмăн хăватлă индустрине тума, малта тăракан социалисăмлă йалхуçалăхне тума, техникă, економикă тата кулљтурă тĕлĕшĕнчен кайа йулнине пĕтерме, Совет государствин халăх хуçалăхне пит нумай укçа-тенкĕ хывмала пулчĕ.

1924 çултан пуçласа 1936 çула çитиччен тĕпрĕн тумали ĕççене ваљљи халăх хуçалăхне пурĕ 180,3 мĕлйард тенкĕ (çав çулсенчи хаксемпе) хывнă. Пирвайхи пйатилеткă умĕнхи 4 çулталăк хушшинче (1924—1928 ç. ç.) 11,1 мĕлйард тенкĕ хывнă. Пирвайхи пйатилеткăн 4 çулталăкĕ хушшинче (1929—1932 ç. ç.) 52,1 мĕлйард тенкĕ хывнă. Иккĕмĕш пйатилеткăн 4 çулталăкĕ хушшинче (1933—1936 ç. ç.) 117,1 мĕлйард тенкĕ хывнă.

СОВЕТ ВЛАÇĔ ÇИРĔМ ÇУЛ ХУШШИНЧЕ

Пропагандиссене ваљљи цифăрлă материал

Колхоз стройĕ çĕнтерни

	1918 ç.	1929 ç.	1930 ç.	1934 ç.	1937 ç.
Колхозсен хисепĕ (пиншерĕн)	1,6	57,0	85,9	233,3	243,7
Колхозсенче тăракан килсен хисепĕ (мĕлйуншерĕн) . .	0,02	1,0	6,0	15,7	18,5
Коллективизаци проценчĕ:					
Хресченсен килĕсен хисепĕнчен	0,1	3,9	23,6	71,4	93,0
Акмали çĕр лаптăкĕнчен .	сведени çук	4,9	33,6	87,4	99,1

Тырă ĕлĕк кам аллинче пулнă тата халь кам аллинче

	Пĕтĕм тырă		Сутлăх тырă	
	Мĕлйуншер пăт	Процентпа	Мĕлйуншер пăт	Процентпа
Патша Роççийĕнче				
Помешчиксем	600	12,0	281,6	21,6
Кулаксем	1 900	38,0	650,0	50,0
Вăтамсемпе чухăнсем	2 500	50,0	369,0	28,4
Пурĕ . . .	**5 000**	**100,0**	**1300,6**	**100,0**
ССР Союзĕнче 1935/36 çулта				
Социалисăмла хуçалăх	5210,6	95,0	1823,4	96,3
Вăл шутра:				
Мĕн пур системăсенчи совхозсем . .	655,8	11,9	241,1	12,7
Колхозсем	4554,8	83,1	1582,3	83,6
Йединоличник хресченсен хуçалăхĕсем	275,7	5,0	70,0	3,7
Пурĕ . . .	**5486,3**	**100,0**	**1893,4**	**100,0**

Ĕлĕк çĕр кам аллинче пулнă, халĕ вăл кам аллинче

Вырăс хресченĕсем çĕр сахаллипе ĕмĕр-ĕмĕр тертленсе пурăннă. Çĕр çинчен ĕмĕтленесси—ăруран ăрува, аслашшĕсенчен—ашшĕсене, ашшĕсенчен—ывăлĕсене, ывăлĕсенчен—ывăлĕн ывăлĕсене куçса пынă. Вырăс хресченĕсен нумай ăрувĕсем çав ĕмĕтпе пурăннă, çав ĕмĕте чи хакла хурса чĕрере усранă, анчах вĕсен хăйсен ĕмĕрхи ĕмĕчĕ çитессине кĕтсе илеймесĕрех вилмеле килнĕ.

Хăш чухне хресченсем пĕтĕм йалĕ-йалĕпе тахçантанпа пурăннă вырăнсенчен тапранса, сут тĕнче тăрăх çĕр шырама тухса кайнă. Атăл тăрăхне, Çĕпĕре кайнă, Инçет-Хĕвелтухăçне те кайнă. Çул çинче йулашки йапалисене те пĕтерсе хăварнă, нумайĕшĕсем, паллă мар çулçÿренсем пек, çул çинчех вилсе йулнă, нумайĕшĕсем, тахçантанпах кĕтекен телейлĕ çĕре тупаймасăр, каллех хăйсен вырăнĕсенех таврăннă.

Патша Роççийĕнче йалхуçалăх çĕрĕсем мĕнле валеçĕнсе тăнă-ха? Мĕн пур хресчен хуçалăхĕсен 214,7 мĕлйун гектар çĕр пулнă. Помещиксен, патша йăхĕнчи çынсен тата мăнастырсен аллинче 152,5 мĕлйун гектар чи лайăх, чи вăйлă тухăç паракан çĕрсем пулнă.

„...Совет влаçĕ помещиксен класне пĕтерчĕ те, 150 мĕлйун ытла гектар помещик, хысна, мăнастыр çĕрĕ пулнă çĕрсене хресченсене пачĕ, астăвас пулат, кăна унччеНех хресченсен аллинче пулнă çĕрсем çумне хушса панă" (Сталин). Халĕ колхоз хресченĕсемпе ĕççынни йединоличниксен аллинче 370,8 мĕлйун гектар йалхуçалăх çĕрĕсем пур. Совхозсен—51,1 мĕлйун гектар çĕр пур.

Октябĕрти Социалисăмла Аслă революци пуличченхи вăхăтра хресчен хуçалăхĕсен аллинче пулнă 214,7 мĕлйун гектар çĕртен 80 мĕлйун гектар ытла кулаксен аллинче пулнă. Халĕ ĕнтĕ кулаксен класне пĕтернĕ, кулаксен аллинче пулнă çĕрсемпе колхозсене кĕнĕ чухăнсем тата вăтамсем усă кураççĕ.

Йалхуçалăх çĕрĕсен пĕтĕм лаптăкĕшĕ те чылайах ÿснĕ. Патша Роççийĕнче йалхуçалăх çĕрĕсем пурĕ 367,2 мĕлйун гектар пулнă. Халĕ ĕнтĕ, 1937 çулхи майăн 1-мĕшĕ тĕлне шутланă тăрăх, йалхуçалăх çĕрĕсем 421,9 мĕлйун гектар пур. Йалхуçалăх çĕрĕсен пĕтĕм лаптăкĕшĕ, революциччĕнхи вăхăтрипе танлаштарсан, 54,7 мĕлйун гектар ÿсни—совхозсем çĕнĕ çĕрсене ĕçлеме пуçланипе тата хысна аллинче пулнă çĕрсен пĕр пайне хресченсене панипе пулнă.

„Кивĕ йĕрке чухне хресченсем пĕччёншерĕн ĕçленĕ, асаттесен ĕлĕкхи майĕсемпе, кивĕ ĕç хатĕрĕсемпе ĕçленĕ, помещиксемпе капиталиссемшĕн, кулаксемпе спекуљантсемшĕн ĕçленĕ, выçăлă-тутăлă пурăнса ĕçленĕ, ытти çынсене пуйтарнă. Çĕнĕ, колхоз йĕрки чухне хресченсем пĕрле, ертеллешсе ĕçлеççĕ, çĕнĕ ĕç хатĕрĕсемпе — трактăрсемпе, йалхуçалăх машинĕсемпе усă курса ĕçлеççĕ, хăйсемшĕн, хăйсен колхозĕсемшĕн ĕçлеççĕ, капиталиссемпе помещиксемсĕр, кулаксемпе спекуљантсемсĕр пурнаççĕ, хăйсен пурнăçне пурлăх тĕлĕшпе те, кул̆тура тĕлĕшпе те кунран кунах аванлатса пыма ĕçлеççĕ".

СТАЛИН, Речь на Первом Всесоюзном с'езде колхозников-ударников, „Вопросы ленинизма" стр. 528, изд. 10-е.

ЙАЛТА ЧУХĂНЛĂХА ПĔТЕРНИ

Революциччен хресчен килĕсен йышĕнче пулнă:

Чухăнсем 65%
Вăтамсем 20%
Кулаксем 15%

Хресченсен мĕн пур килĕсенчен пулнă:

Лашасăррисем 30%
Инвентарсăррисем . . . 34%
Çĕр акманнисем 15%

Революци пуличчен 2 мĕлйун çын чухăнсем кашни çулленех ĕç шыраса кăнтăр йенне, çурçĕр Кавказа тата Украинăна кулаксем патне тата помещиксем патне батрака кĕрĕшме кайнă.

Колхоз строительстви сарăлса кайиччен (1928—29 ç.) 25 мĕл. хресчен килĕсенчен пулнă:

Чухăнсем 35%
Вăтамсем 60%
Кулаксем . . . . 4—5%

Халĕ (1937 ç.)

243,7 пин колхозсене пĕрлешнĕ . . . . 18,5 мĕл. кил
Йединоличниксем йулнă 1,4 —„—
Акмали çĕртен шутласан коллективизаци проценчĕ . . 99,1 %

Колхозсем малта тăракан машиналă техникăпа авăрланнă. Колхозсен уйхирĕсенче МТС аллинче тăракан 356,8 пин трактăр, 96,3 пин комбайн тата груз турттармали автомашинăсем 56,0 пин ĕçлеççĕ.

Колхозсене пула йалта чухăнлăха пĕтернĕ, нимĕнле пурлăхсăр, лашасăр, инвентарсăр тата çĕрсĕр хуçалăхсем тек çук. Çакăнсăр пуçне хулара тата йалта безработица пĕтмен пулнă пулĕччĕ.

Халĕ ĕнтĕ йалта 20—30 мĕлйун çын таран шутланнă выçă пурăннă чухăнсем çук, мĕншĕн тесен вĕсем колхозсене кĕнĕ, çителĕклĕ пурнăçпа пурăнакан çынсем пулса тăнă, вĕсем пуйан пурнăçа ăнăçлăн туса пыраççĕ.

ССРС акакан çĕр талкишĕ ÿсни

(Мĕлйуншер гектарпа)

	1913 ç.	1937 ç.	1913 çулхипе танлаштарсан акнă çĕр талкишĕ ÿсни
Акакан пĕтĕм çĕр	105,0	135,2	30,2
Вăл шутран:			
Тулă	31,6	41,4	9,8
Çĕр мамăкĕ	0,7	2,1	1,4
Йĕтĕн-долгунец	1,0	2,1	1,1
Сахăр кăшманĕ	0,6	1,2	0,6
Хĕвелçавăрнăшĕ	1,0	3,3	2,3
Пахча-çимĕçсем	0,5	1,4	0,9
Çĕрулми	3,1	6,8	3,7

Тĕштырă туни

	Мĕлйардшер пăтăн
Вăрçăччен	4—5
1925 ç.	4,4
1930 ç.	5,1
1933 ç.	5,5
1937 ç. (малтанласа шутлани)	6,8

ССРС-че çĕр ĕçĕ вăрçă умĕнхинчен икĕ хут нумайрах продукци парат

Йалхуçалăхĕн продукцийĕ

	1926-27 ç. хаксемпе 1913	1926-27 ç. хаксемпе 1935	1937 (малтанласа шутлани)		1926-27 ç. хаксемпе 1913	1926-27 ç. хаксемпе 1935	1937 (малтанласа шутлани)
Çĕр ĕçĕн продукцийĕ:				Çĕр ĕçĕн тата выљăх-чĕрлĕх продукцийĕ:			
Мĕлйардшер тенкĕпе .	8,0	11,9	16,6	Мĕлйардшер тенкĕпе	12,6	15,8	233,0
1913 çулхипе танлаштарсан процентпа .	100	148	207	1913 çулхипе танлаштарсан процентпа .	100	125	183

Епĕр сухапуçлĕ çĕршыв пулнă, епĕр трактăрлă тата комбайнлă çĕршыв пулса тăтăмăр

	Патша Роççийĕнчи хресчен хуçалăхĕсем	ССР Союзĕнче—1936 çулта Совхозсем	Колхозсем	Совхозсемпе колхозсенче вăтамран
		Çакăн чухлĕ тенкĕлĕх (1926—27 ç. хакпа)		
Акнă 1 гектар тÿпине тивнĕ:				
Йалхуçалăх машинĕсемпе орудийĕсем	6	35	18	20
Комбайнсем	0	15	4	5
Трактăрсем	0	47	11	15
Автомобилсем	0	18	4	6
Пурĕ . . .	6	115	37	46

Патша Роççийĕнче хресчен хуçалăхĕсен ĕçлемели тĕп хатĕрсем—сухапуççем, косуљсем, йăвăç плугсемпе йăвăç сÿресем пулнă.

1910 çулхи перепиç тăрăх хресчен хуçалăхĕсен пулнă:

Сухапуççемпе косуљсем . . . . . . 7,8 мĕл. штук
Йăвăç плугсем . . . . 2,2 „
Тимĕр плугсем . . . . 4,2 „
Йăвăç сÿресем . . . . 17,7 „

Йалхуçалăх машинĕсем кăларни

Патша Роççийĕн промышленнăçĕ чи простой йалхуçалăх машинĕсем çеç, вĕсене те пит сахал тунă. Йалхуçалăх машиностройенин пĕтĕм продукцийĕ 1913 çулта 55 мĕлйун тенкĕ тăнă (1926/27 ç. хаксемпе). 1936 çулта йалхуçалăх машиностройенин пĕтĕм продукцийĕ (ку шута трактăрсен хакне те кĕртнĕ) 2.260,8 мĕлйун тенке çитнĕ (1926/27 ç. хаксемпе).

1936 çулта социалисăмла промышленнăç йалхуçалăхне 2.646,4 лаша вăйĕ чухлĕ 116.054 трактăр панă. Çав çултах йалхуçалăх машиностройени завочĕсем çĕршыва 42,6 пин комбайн панă; тата трактăр плугисем (йатарласа тунисемсĕр пуçне), корпуссем çине куçарса шутласан, 285 пин корпус панă; трактăрпа ĕçлемели култиватăрсем 50,2 пин; трактăрпа ĕçлеве пĕрчĕлĕ тырăсем акмали сейăлкăсем 56,4 пин; çĕрмамăкĕ акмали сейăлкăсем 8,1 пин; йĕтĕн акмали сейăлкăсем 2,4 пин; йĕтĕн татмали машинăсем 3,3 пин; сахăр кăшманĕ акмали сейăлкăсем 7,3 пин; трактăрпа ĕçлесе сахăр кăшманĕ кăлармали машинăсем 7,3 пин; трактăрпа ĕçлесе çĕрулми кăлармалисем 2,6 пин; трактăрпа çапакан молотилкăсем 9,6 пин панă.

Çĕрмамăкĕ, йĕтĕн тата сахăр кăшманĕ акса туни

Пирĕн çĕршыв тĕш тырăсем акса тăвас тĕлĕшпе çеç мар, тата техникăла кул̆турăсем, чи малтан çĕрмамăкĕ, йĕтĕн тата сахăр кăшманĕ акса тăвас тĕлĕшпе пит пысăк çĕнтерÿсем турĕ. 1913 çулта патша Роççийĕнче 7,4 мĕлйун центнер çĕрмамăкĕ пуçтарса илнĕ. Иртнĕ çулта ССР Союзĕнче çĕрмамăкĕ 23,9 мĕлйун центнер пуçтарса илнĕ.

Çĕрмамăкĕ акса тăвас тĕлĕшпе Совет Союзĕ Йевропăри çĕршывсем хушшинче пĕрремĕш вырăнта тăрат тата вăл ку тĕлĕшпе пĕтĕм тĕнчере виççĕмĕш вырăнта тăрат (пирĕнтен малта Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсем тата Британи Индийĕ тăраççĕ). Пирĕн текстил промышленнăçĕ çĕрмамăкĕ тĕлĕшпе йутçĕршывсене пăхăнса тăрасран пĕтĕмпех хăтăлчĕ, халĕ вăл пĕтĕмĕшпех Совет çĕршывĕнче тунă çĕрмамăкĕпе ĕçлет. 1913 çулта патша Роççийĕ йутпатшалăхсенчен 6,4 мĕлйун центнер чĕрĕ çĕрмамăкĕ кÿрсе килнĕ.

Государствă хресченсене государствăна сутнă çĕрмамăкĕшĕн 1933 çулта 385,8 мĕлйун тенкĕ, 1936 çулта—4.076,6 мĕлйун тенкĕ тÿленĕ.

Патша Роççийĕнче 1913 çулта йĕтĕн сÿсĕ 3,3 мĕлйун центнер тунă. ССР Союзĕнче иртнĕ çулта 5,3 мĕлйун центнер йĕтĕн сÿсĕ тунă.

Совет Союзĕ сахăр кăшманĕ акса тăвас тĕлĕшпе те пит пысăк çитĕнÿсем турĕ. 1913 çулта патша Роççийĕнче 109 мĕлйун центнер сахăр кăшманĕ пуçтарса кĕртнĕ. Пирĕн çĕршывра иртнĕ çулта сахăр кăшманĕ 168,3 мĕлйун центнер пуçтарса кĕртнĕ.

Сахăр кăшманĕ тата йĕтĕн продукцийĕ тĕлĕшпе ССР Союзĕ пур капиталисăмла çĕршывсенчен те малта пырат тата пĕтĕм тĕнчере пĕрремĕш вырăнта тăрат. Государствă хресченсене государствăна сутнă сахăр кăшманĕшĕн 1933 çулта 166,3 мĕлйун тенкĕ, 1936 çулта—438,3 мĕлйун тенкĕ тÿленĕ.

★

Колхозсен таварлă выљăх-чĕрлĕх фермисен ÿсĕмĕ

1930 çулта колхозсенче выљăх-чĕрлĕх ĕрчетекен фермăсем тума тытăннă. Унтанпа фермăсен хисепĕ çулленех ÿссе пырат. 1932 çулхи йанварĕн 1-мĕшне колхозсенче 62 пин фермă пулнă, ку фермăсенче майракалă шултăра выљăхсем 5,4 мĕлйун пуç, сыснасем 2,1 мĕлйун пуç тата сурăхсемпе качакасем 1,6 мĕлйун пуç шутланнă.

1934 çулхи йанварĕн 1-мĕшне фермăсен хисепĕ 132 пине çитнĕ. Вĕсене майракалă шултăра выљăхсем 5,6 мĕлйун пуç, сыснасем 2,5 мĕлйун пуç тата сурăхсемпе качакасем 7 мĕлйун пуç пулнă.

1934 çул выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре улшăнулă çул пулса тăчĕ. Партин XVII-мĕш сйесĕнче Сталин йулташ çапла каларĕ: „Выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе пирĕн пĕтĕм партин, пĕтĕм работниксен, партире тăракансен те, партире тăманнисен те, хăйсен аллине илмеле..." Сталин йулташ сăмахĕсене пур çĕрте те хĕрÿлĕн йышăнчĕç. Выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç хăвăрт малала кайма пуçларĕ.

Партипе правительствă колхозсене, колхозсен таварлă фермисене аталатас ĕçре пысăк пулăшу пачĕç. Фермăсенчи выљăх-чĕрлĕхсен хисепĕ ÿсрĕ, халĕ те ÿссех пырат. 1937 çулхи йанварĕн 1-мĕшне колхозсенче 371 пин фермă пулнă, вĕсенче майракалă шултăра выљăхсем 12 мĕлйун пуç, сыснасем 5,3 мĕлйун пуç тата сурăхсемпе качакасем 18,7 мĕлйун пуç шутланнă.

1937 çул пуçланнă тĕлте 235 пин колхозăн, йе пĕтĕм колхозсен хисепĕнчен 95,7 процентĕн, таварлă выљăх-чĕрлĕх фермисем пулнă.

Выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç, реорганизаци тапхăрĕнче чакнăскер, çак тапхăр иртнĕ хыççăн хăвăрт ÿссе пымали çул çине тухрĕ.

ĔÇÇЫННИСЕН КУЉТУРИ ХĂПАРСА ПЫНИ

ССР Союзĕнчи вĕренекенсен йышĕ

	1914 ç.	1928/29 ç.	1936/37 ç.	1936/37 çулта айалараx кăтартнинчен миçе хут ытларах пулнă: 1914 ç.	1928/29 ç.
Вĕренекенсен хисепĕ (пиншерĕн)					
Мĕн пурĕ вĕренекенсем . . .	8 137	15 008	38 335	4,7 хут	2,6 хут
Пуçламĕш тата вăтам шкулсенче	8 025	12 604	28 842	3,6 „	2,3 „
Вĕсенчен вăтам шкулсенче .	995	3 717	17 872	18 хут	4,8 „
Вăл шутра специаљни вăтам шкулсенче	79	206	769	9,7 хут	3,7 „
Ÿснисен шкулĕсенче	пулман	2 226	8 942	—	4 хут
Аслă шкулсенче	112	177	542	4,8 хут	3,1 хут
Аспирантсем	сведени çук	1	9	—	9 хут

Халăха çутта кăларас ĕç ваљљи тухакан расхутсем

Кул̆тура строительствин отрăçлисем	1925/26. (Мĕлйуншер тенкĕпе)	1936 (Мĕлйуншер тенкĕпе)	1936 çулта 1925/26 çулхинчен миçе хут ытларах
Халăха çутта кăларас ĕç ваљљи пĕтĕм расхутсем	559	13461	24,0
Вăл шутра:			
Пĕтĕмĕшлĕ образованипе ачасене воспитани пама	298	6777	22,7
Искусствă	2	238	119,0
Кадрсем хатĕрлесси	160	4655	29,1
Наукă	28	827	29,5

Клубсем, вулав çурчĕсем тата библиотекăсем

	1914 ç.	1936 ç.
Мĕн пурĕ клубсемпе вулав çурчĕсем	222	80 946
Хуласенче . . .	134	17 175
Йалсенче . . .	88	63 771
Библиотекăсен хисепĕ	12 600	55 901

Кĕнекесемпе хаçатсем

ССР Союзĕнче тухса тăракан мĕн пур хаçатсен пĕр кунхи тиражĕ 1936 çулта 37.971 пин екземпљар пулнă. 1936 çулта кăларнă пĕтĕм кĕнекесен тиражĕ 571,1 мĕлйун екземпљара çитнĕ.

50 çул хушшинче, 1864 çултан пуçласа 1914 çула çитиччен, марксисăм классикĕсен, Маркс—Енгељс—Ленин—Сталин произведенийĕсене 0,5 мĕлйун екземпљар тиражпа кăларнă. Совет Союзĕнче 20 çул хушшинче ку произведенисене 334,6 мĕлйун екземпљар тиражпа кăларнă, 1936 çул хушшинче—43 мĕлйун екземпљар кăларнă. Сталинла Конституцийе 62 чĕлхепе 27,5 мĕлйун екземпљар кăларнă. Сталин йулташ „ССР Союзĕн Конституци пройекчĕ çинчен" тунă доклада 15,4 мĕлйун екземпљар тиражпа кăларнă. ССР Союзĕнче хаçатсем ССР Союзĕнчи халăхсен 69 чĕлхипе тата кĕнекесем—111 чĕлхепе тухса тăраççĕ.

ССР Союзĕнчи физкул̆турă

1937 çулхи йанварĕн 1-мĕшне:

ГТО 1-мĕш ступень нормисене панисем (пиншерĕн)	4.361
Вĕсенчен хĕрарăмсем (пиншерĕн)	435
Стадионсен хисепĕ	649
Спортплощадкăсен хисепĕ	7.208
Шыв станцисен хисепĕ . .	342
Йĕлтĕр станцисен хисепĕ .	2.674

★

Колхозниксене выљăх-чĕрлĕх туйанма пулăшни

„Ĕнтĕ епĕр, болљшевиксем,— тенĕ Сталин йулташ колхозник-ударниксен Пĕтĕм Союзри пĕрремĕш сйесĕнче,—пирĕн пур колхозниксен те пĕрер ĕне пултăр тесе тăрăшăпăр тăрăшăпăрах". Ку вăл 1933 çулта пулчĕ. Колхозниксемпе колхозницăсемшĕн çакăн пек болљшевикла, сталинла тăрăшнине колхозлă йал хĕрÿлĕн тавтуса йышăнчĕ.

Партипе правительствă колхозниксене тата колхозницăсене выљăх-чĕрлĕх туйанма пулăшас тĕлĕшпе пысăк вăй хурса ĕçлерĕç, халĕ те çаплах ĕçлесе пыраççĕ. Пит пысăк ĕççем туса иртернĕ ĕнтĕ. Колхозниксемпе колхозницăсене выљăх-чĕрлĕх туйанма пысăк кредитсем панă. Вĕсене ваљљи љготăпа выљăх-чĕрлĕхсем сутнă.

1933 çултан пуçласа 1937 çула çитиччен колхозсене тата колхозниксене љготăпа тата кивçен парса 1118 пин ĕнесемпе пăрусем, 1.546 пин сыснасемпе сысна çурисем тата 2.393 пин сурăхсемпе сурăх путеккисем сутнă.

Колхозсен фермисем çав вăхăт хушшинчех колхозниксене љготăла хакпа тата кивçен парса 1.408 пин ĕнесемпе пăрусем, 10.696 пин сыснасемпе сысна çурисем тата 3.237 пин сурăхсемпе сурăх путеккисем сутнă.

Ĕнесĕр пурăннă колхозниксене контрактаци туса љготăлă условисемпе 3.336 пин пăру сутнă.

Колхозниксем тата колхозницăсем хăйсен килĕнче усракан выљăх-чĕрлĕхсен хисепĕ çуллен-çулах ÿссе пырат.

Пӗтӗм Совет Союзӗ тӑрӑх суйлав кампанийӗ пысӑк ҫӗкленӳпе сарӑлса пырать

Сталин йулташ—пӗтӗм совет халӑхӗн ССР Союзӗн Аслӑ Советне депутата суйламали пӗрремӗш кандидат

Аслӑ Совет ҫӗршывӗнче ССР Союзӗн Аслӑ Советне суйламали суйлав кампанийӗ пысӑк ҫӗкленӳпе сарӑлҫа пырать. Суйлав умӗнхи пухусем коммуниссем тата партире тӑманнисем пӗрпӗринпе ҫирӗп ҫыхӑнса тӑнине, хӑватлӑ Совет Союзӗнчи пур халӑхсем те большевиксен парти тавра, унӑн Сталинла Тӗп Комитечӗ тата Совет правителстви тавра тачӑ пӗтӗссе тӑнине кӑтартса параҫҫӗ.

Суйлав умӗнхи пухусенче ҫӗршывӑн чи лайӑх ҫыннисене—партири тата партире тӑман большевиксене, Ленин—Сталин ӗҫӗшӗн ҫирӗп кӗрешекен борецсене Союз Советне тата Националӑнӑҫсен Советне депутата суйлама кандидата тӑратаҫҫӗ.

Пур ҫӗрте те ӗҫҫыннисен пиншер ҫынлӑ пухувӗсенче пурте пӗр ҫын пек пулса халӑхсен аслӑ ҫулпуҫне Сталин йулташа ССР Союзӗн Аслӑ Советне депутата суйлама кандидата тӑратнине хапӑлласа йышӑнаҫҫӗ.

Тифлис хулинчи Сталин йачӗпе тӑракан паровозсем йусакан савӑтри тӑватӑ пин ҫынлӑ коллектив Сталин йулташа Союз Советне депутата суйлама кандидата тӑратнӑ та ун патне ҫыру йанӑ,—ҫырура вӗсем ҫапла ҫыраҫҫӗ:

„Йуратнӑ ҫулпуҫӗн кандидатуришӗн сасӑласси пирӗншӗн чи пысӑк хисеплӗх тата чи пысӑк телей пулса тӑрать. Совет халӑхӗ тунӑ аслӑ ҫӗнтерӳсем пурте санӑн йатупа ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ“.

Горький хулинчи суйлав умӗнхи пухусенче—„Красное Сормово“ завод, Молотов йачӗпе тӑракан автозавод, Ленин йачӗпе тӑракан завод, —„Красная Этна“ завод, Воробйов йачӗпе тӑракан завод, „Красный Октябрь“, текстил фабрикӗ коллективӗсем т. ыт. те Сталин йулташа Националӑнӑҫсен Советне депутата суйлама кандидата тӑратнӑ.

Молотов йачӗпе тӑракан автозаводри пухура, паллӑ тимӗрҫ-орденоносец Фаустов йулташ сӗннипе, Сталин йулташӑн шанчӑклӑ соратникне, Совет правителствин пуҫлӑхне—Молотов йулташа Союз Советне кандидата тӑратнӑ.

Суйлав умӗнхи пухусенче ӗҫҫыннисем пысӑк хавасланхпа ССР Союзӗн Аслӑ Советне депутата суйлама Молотов, Каганович, Ворошилов, Калинин, Андрейев, Микойан, Чубарь, Жданов, Йежов йулташсене кандидата тӑратаҫҫӗ.

Союз Советне депутата суйлама тата ҫак йулташсене кандидата тӑратнӑ:

Пӗтӗм Союзри Профсоюзсен Тӗп Совечӗн секретарне, Тӗп суйлав комиҫҫи председателне Москатов йулташа—Ростов облӑҫӗнчи ОГПУ йачӗпе тӑракан шахтӑ коллективӗнчен; ССР Союзӗн прокурорне Вышински йулташа—Мускаври „Ява“ фабрикӗнчен; Совет Союзӗн Геройне Громов йулташа—Мускаври Маленков йачӗпе тӑракан чукун шӑратакан арматурӑ заводӗнчен; Совет Союзӗн Геройне, Хӗрлӗ Ҫарӑн ватӑ командирӗсенчен пӗрне комдив Петров йулташа—Наро-Фоминскри ҫип арлакан тата тӗртекен фабрик коллективӗпе Мускав облӑҫӗнчи Ворошилов йачӗпе тӑракан ертелри колхозниксенчен; Пӗтӗм Союзри Профсоюзсен Тӗп Совечӗн секретарне Шверник йулташа—Верх-Исетскри металлурги завочӗн коллективӗнчен (Свердловск облӑҫӗ); ПСК(б)П Новосибирск обкомӗн секретарне Ейхе йулташа—Новосибирскри чукунҫул узелӗн коллективӗнчен; Тӗп суйлав комиҫҫи секретарне, ПСК(б)П Тӗп Комитечӗн йертсе пыракан парторганӗсен пайӗн пуҫлӑхне Маленков йулташа—Мускаври Мосбелье 6-мӗш №-лӗ фабрикӗн коллективӗнчен; Белоруссири Коммуниссен (большевиксен) Партин Тӗп Комитечӗн пӗрремӗш секретарӗн ӗҫӗсене туса тӑракан Волков йулташа—Гомельри йалхуҫалӑх машиностройени завочӗн коллективӗнчен; ПСК(б)П Горьки обкомӗн секретарне Ю. М. Каганович йулташа—Горькири „Красное Сормово“ завод коллективӗнчен; ПСК(б)П Ленинград хула комитечӗн секретарне Угаров йулташа—Ленинград хулинчи Смольный суйлав округӗнчи Халтурин йачӗпе тӑракан ҫип арлакан комбинат, „Красный инструментальщик“ завод тата „Красная работница“ фабрик коллективӗсенчен; ПСК(б)П Тӗп Комитечӗ ҫумӗнчи Партилӗ Контроль Комиҫҫин членне Шкирйатов йулташа—Тула облӑҫӗнчи Лаптевӑ районӗнчи Шкирйатов йачӗпе тӑракан колхозран; Ленинградри Жданов йачӗпе тӑракан заводри стахановкӑ-орденоноскӑ Смирнова йулташа—Жданов йачӗпе тӑракан завод коллективӗнчен; Мускав облӑҫӗнчи Калинин йачӗпе тӑракан заводри рабочи-стахановец Малышин йулташа—Калинин йачӗпе тӑракан завод коллективӗнчен; ПСК(б)П Архангельск обкомӗн секретарне Конторин йулташа—Архангельскри сульфат-целлюлоза заводӗнчен; хӑма ҫурас ӗҫре стахановла йухӑма пуҫарса йанӑ паллӑ стахановец-орденоносец Мусински йулташа—Архангельск облӑҫӗнчи Нйандом районӗнчи Шалакуш хӑма заводӗнчен; ПСК(б)П Курск обкомӗн секретарне Пескарев йулташа—Курск суйлав округӗнчи атӑ-пушмак фабрикӗнчен тата „Победа“ йалхуҫалӑх ертелӗнчен; Дон-ҫи Ростоври Ленин йачӗпе тӑракан паровозсем йусакан хӗрлӗ йалавлӑ заводри ватӑ рабочийе Федоров йулташа—ҫав заводӑн коллективӗнчен; паллӑ писатӗл-большевик Михаил Шолохова—Ростов облӑҫӗнчи Новочеркасскри индустри институтӗнчен; ҫӗршыври мухтавлӑ ҫынна, халӗ „Донбассантрацит“ тресчӗн председателӗ пулса ӗҫлекен Никита Изотов йулташа—Ростов облӑҫӗнчи „Пролетарская диктатура“ шахтӑ коллективӗнчен; ПСК(б)П Харьков обкомӗн секретарне Осипов йулташа—Лозовойри (Харьков облӑҫӗ) вагонсем йусакан завод коллективӗнчен.

Липецк хулинчи (Воронеж облӑҫӗ) „Станколит“ завочӗн коллективӗ хӑйсен земляке Совет Союзӗн Геройне Водопйанов йулташа Союз Советне депутата суйлама кандидата тӑратнӑ. Октаберӗн 25-мӗшӗнче О. Ю. Шмидт йулташ Рудольф утравне Водопйанов йулташ патне Липецкри „Станколит“ завочӗн коллективӗнчен илнӗ телеграммӑна йанӑ. Завод коллективӗ Водопйанов йулташран Липецк суйлав округӗнче баллотировкӑна тӑма килӗшӳ пама ыйтать.

(ТАСС).

Шупашкарти тир-сӑран заводӗнче

Ултӑ сехет. Ҫулпуҫсен портречӗсемпе, лозунгсемпе, плакатсемпе илемлетнӗ клуба халӑх лӑках тулнӑ. Тир-сӑран заводӗнчи завком председателӗ Гуляйев йулташ рабочисен, инженерсен-техниксен, служӑшчисен пухуне уҫать.

Кун йеркинче пӗр ыйту: РСФСР-чи Горький округӗнчен Националӑнӑҫсен Советне депутата суйлама кандидатсем палӑртса, вӗсене сӳтсе йавасси. Шупашкар хула комитечӗн представителӗ Калинкинӑ йулташ Сталинла Конституци тӑрах Советсен Аслӑ Советне суйлассипе ҫинчен каласа панӑ хыҫҫӑн, Националӑнӑҫсен Советне депутата суйлама кандидатсем палӑртса, вӗсене сӳтсе-йавасси пуҫланчӗ. Чи малтанах Бызов рабочи сӑмах илет.

Бызов рабочи сӑмахӗ

Ӗлӗкхи вӑхӑтра, патша самани вӑхӑтӗнче, рабочисемпе хресченсене вылях выраннех хунӑ. Хусан хулинчи пӗр сад алӑкӗ ҫине „салтаксене, йытӑсене сада кӗме йурамасть“, тесе ҫырса ҫапнӑччӗ.

Халӗ епӗр телейлӗ пурнӑҫра пурӑнатпӑр. Ку телейлӗ пурнӑҫа пире коммунисла парти, унӑн ҫулпуҫӗ Сталин йулташ панӑ. Сталин йулташ хӑйӗн ӗмӗрӗнче ӗҫхалӑхӗн пурнӑҫне лайӑхлатассишӗн тӑрӑшса ӗҫленӗ. Ҫавӑнпа та епӗ РСФСР-чи Горький округӗнчен Националӑнӑҫсен Советне депутата суйлама пӗтӗм тӗнчери пролетариатӑн ҫулпуҫне Сталин йулташа кандидата тӑрататма сӗнетӗп.

Сывӑ пултӑр пире телейлӗ те савӑнӑҫлӑ пурнӑҫ туса, паракан Сталин йулташ! (Алӑ ҫупаҫҫӗ).

Жданко йулташ сӑмахӗ

Епӗр пайан Националӑнӑҫсен Советне депутата суйлама кандидатсем тӑратасси ҫинчен сӳтсе-йаватпӑр. Ӗлӗкхи вӑхӑтра епӗр кандидатурӑсене уҫҫӑн сӳтсе-йавасси ҫинчен шутлама та пултарайман. Халӗ епӗр телейлӗ пурнӑҫпа пурӑнатпӑр. Ку пурнӑҫа пире партипе правителствӑ, Сталин йулташ панӑ. Ахаль мар ӑна Мускаври, Ленинградри рабочисем Союз Совечӗн депутатне суйлама кандидата тӑратаҫҫӗ. „Союз Совечӗн депутатне суйламали чи лайӑх кандидатурӑ, чаплӑ кандидатурӑ тата пӗрремӗш кандидатурӑ пирӗн йуратнӑ, пирӗн хаклӑ Сталин йулташ кандидатури пулмала“ теҫҫӗ. Епӗ те Сталин йулташа Аслӑ Советӑн депутатне суйлама кандидата тӑратнине ҫумне (Алӑ ҫупаҫҫӗ).

Тата епӗ ҫамрӑксене хӑмӑн ӗлӗкхи пурнӑҫ ҫинчен каласа парасшӑн. Епӗ 12 ҫултах Медведев хуҫа патне ӗҫе кӗтӗм. 4 ҫул хушши вӑл мана пӗр укҫасӑр ӗҫлеттерчӗ. Кунне 12-шер сехет ӗҫлевӗ. Мӗнчул нуша курман пулӗ епӗ ку хуҫа патӗнче. Пӗрре витери тикете пӗртак тӑкса йанӑшӑн, 30 градуслӑ сивӗ вӑхӑтӗнче тулта тытса тӑратрӗ. 4 уйӑх укҫасӑр ӗҫленӗ хыҫҫӑн, ҫулталӑкне 10 тенкӗ тӳлеме пуҫларӗ. Кам мӑшкӑламан пулӗ пирӗнтен. Пирӗнтен, рабочисенчен, производствӑра та, патша ҫарӗнче те мӑшкӑланӑ. Пирӗнтен кулнӑ, пире хӗсӗрленӗ. Совет влаҫӗ ҫеҫ пире ирӗк пачӗ.

Макаров рабочи сӑмахӗ

Капиталиссем вӑрҫӑсӑр пире парӑнасшӑн пулман. Граждӑн вӑрҫи вӑхӑтӗнче те вӗсем пирӗн ҫине пур йенчен те тапанчӗҫ. Рабочи клас сахал йун тӑкман. Камшӑн тӑкнӑ? Социалисӑмшӑн, телейлӗ пурнӑҫшӑн. Епӗ ку пурнӑҫшӑн пайтах нуша курнӑ: граждӑн вӑрҫи вӑхӑтӗнче, 1921 ҫулти кулаксен контрреволюцилӗ восстанинче те. Ҫавах епӗ чӗрӗ йулнӑ. Сахал мар кӗрешнӗ. Халӗ епӗр телейлӗ те савӑнӑҫлӑ пурнӑҫпа пурӑнатпӑр. Ку телейлӗ пурнӑҫа пире Сталин йулташ туса панӑ. (Алӑ ҫупаҫҫӗ). Ҫавӑнпа та Горький округӗнчен Аслӑ Советӑн депутатне суйлама Сталин йулташӑн кандидатурине тӑратмала.

Корнилов йулташ сӑмахӗ

Ӗлӗкхи вӑхӑтра йал старӑстине суйланӑ чух та пире сасӑ паман. Кам ерех ӗҫтернӗ, ӑна суйланӑ. Кулаксене суйланӑ, вӗсем пире хӗснӗ, пирӗн йуна ӗҫсе пурӑннӑ. Патша саманинче йалта ҫӑкӑр ҫитмен пирки, ирӗксӗрех пирӗн хулана тарҫӑна кайса пурӑнма тивнӗ. Епӗ хам та Овечкина купец патӗнче пӗр укҫасӑр ӗҫлесе пурӑннӑ. Ун хыҫҫӑн Таврин хуҫа патӗнче дворник пулса пурӑнтӑм. Вӑл ун чухне ҫак заводӑн хуҫи пулнӑ. Епӗ дворник ӗҫне ҫеҫ мар, мӗн хушнӑ, ӑна тунӑ. Кунне 18 сехет ӗҫленӗ, пире уншӑн ырӑ сӑмах та каламан. Пире тӗттӗмре усранӑ.

Октабӗр революци хыҫҫӑн ҫеҫ епӗр лайӑх пурнӑҫ ҫулӗ ҫине тӑтӑмӑр. Халӗ телейлӗ пурнӑҫпа пурӑнатпӑр. Кам пирӗн пурнӑҫа лайӑхлатрӗ? Сталин йулташ. Ҫавӑнпа та епӗ Аслӑ Совет депутатне суйлама Сталин йулташ кандидатурине тӑрататпӑр, уншӑн сасӑлатпӑр.

Шутурлова работницӑ сӑмахӗ

Епӗр, ҫамрӑксем, капиталисӑм пусмӑрне тӳссе курман. Патша саманин ирсӗр ӗҫӗсем ҫинчен епӗр кӗнеке ҫинче вуланипе, рабочисемпе работницӑсем каласа пани тӑрӑх пӗлетпӗр. Пирӗн, Совет Союзӗнчи хӗрарӑмсен, арҫынсемпе пӗртанах правасем пур. Епӗр, хӗрарӑмсем, телейлӗ те савӑнӑҫлӑ пурнӑҫпа пурӑнатпӑр. Ку телейлӗ пурнӑҫа пире Сталин атте панӑ. Епӗ Сталиншӑн алӑ тӑрататӑп. (Алӑ ҫупаҫҫӗ).

ССР Союзӗн Аслӑ Советне суйлама хатӗрленни

(Вырӑнти хаҫатсен страницисем тӑрӑх)

◆ Куйбышев облӑҫӗн Алексейев районӗнчи йалсоветсемпе чылай колхозсем консультаци сӗтелӗсем организациленӗ. Колхоз клубӗсенчӗ, хӗрлӗ кӗтессенче кашни граждӑнинах консультаци сӗтелӗсем ӑнлантарнипе ССР Союзӗн Аслӑ Советне суйлассипе ҫыхӑннӑ интереслентерекен ыйтусемпе ответ илме пултарать.

◆ Ленинград облӑҫӗнчи Териберкӑ йалӗнче колхозниксен килӗсенче ҫеҫ мар, йединоличниксен килӗсенче те 57 опытлӑ пропагандис пӗр татти-сыпписӗрех ҫӗнӗ суйлав саккунӗ ҫинчен каласусем туса ирттереҫҫӗ.

◆ Куйбышев облӑҫӗн Кошкин районӗнчи „Заливное“ колхозӗнчи 60 хутла пӗлмен колхозник суйлав бӳллетенӗсене хӑйсем тӗллӗнех тултарас тесе, хутпӗлменлӗхе пӗтерес тӗлӗшпе ӗҫлекен кружокра тӑрӑшса вӗренеҫҫӗ.

(ТАСС).

Шупашкарти спирт заводӗнче

Октаберӗн 25 мӗшӗнче Шупашкарти спирт заводӗнчи рабочисен, служӑшчисен, инженерсемпе техниксен пухувӗ пулчӗ. Пухура пӗр саслӑн, пӗр кӑмӑллӑн чӑваш ӗҫҫыннисенчен Горький суйлав округӗ тӑрӑх Националӑнӑҫсен Советне депутата Сталин йулташ кандидатурине тӑратма палӑртрӗҫ. Ерех тултаракан тата кӗленчесем ҫӑвакан цехри бригадир партире мар большевик, Карамзина йулташ: епӗ хамран пӗтӗм чӗремпе Националӑнӑҫсен Советне депутата суйлама пире телейлӗ те савӑнӑҫлӑ пурнӑҫ туса паракана—Иосиф Виссарионович Сталинӑн кандидатурине тӑратма сӗнетӗп тесен, пӗтӗм зал тӑвӑллӑн алӑ ҫупнипе йантраса кайать, „Урра!“ кӑшкӑраҫҫӗ. Ҫак Сталин сӑмахра мӗн тери ырлӑх, мӗн тери савӑнӑҫ, мӗн тери телейлӗх тытӑнса тӑнине вӗсем ӑнланаҫҫӗ.

Карамзина йулташ сӗннӗ кандидатурӑ майлӑ пулса, заводри рабочисем, служӑшчисем, инженерпа техниксем пӗрин хыҫҫӑн тепри тухса сӑмах калать.

Платочова йулташ (столовӑйри буфетчицӑ) тухса ҫапла каларӗ:

— Ӗлӗкхи пурнӑҫ асаплӑ пурнӑҫ пулнӑ. Халӗ епӗр тутлӑ та ҫута пурнӑҫпа пурӑнатпӑр. Сталин йулташ пире телейлӗ пурнӑҫ туса пачӗ. Ҫавӑнпа та епӗ Карамзина йулташ сӗннӗ кандидатурӑ майлӑ пулатӑп.

Карамзина йулташ сӑмахӗ

Йулташсем! Епӗ хамӑн пурнӑҫра пур йӑварлӑхсене те тӳссе иртернӗ. Епӗ ӗлӗк чи тӗттӗм, чи кайа йулнӑ ҫын пулнӑ. Пайанхи кунхи пек пысӑк савӑнӑҫ манӑн пурнӑҫӑмра пулман та. Пайан манӑн чӗрем тулли савӑнӑҫпа тулнӑ. Пӗтӗм чӗрем, пӗтӗм кӑкӑрӑм Сталинла Конституци панӑ ырлӑхсемпе, телейлӗхсемпе, малала утас ҫул ҫинчи ҫирӗп шанчӑклӑхсемпе тулнӑ. Пайан епӗр Горький суйлав округӗ тӑрӑх (Горький суйлав округне Чӑваш республикӗ те кӗрет) Националӑнӑҫсен Советне депутата суйлама кандидатурӑсем палӑртма пухӑнтӑмӑр. Шутласа пӑхӑр-ха, йулташсем! Совет Союзӗнчи пек урӑх хӑш государствӑра ӗҫҫыннисем государствӑн аслӑ органне суйлас ҫӗре хӑйсен хушшинчен кандидатурӑсем тӑратас ӗҫе активлӑн хутшӑнаҫҫӗ? Нимӗнле ҫӗршывра та, тӗнчен нихӑш пайӗнче те урӑх пирӗнни пек демократилӗ ҫӗршыв ҫук. Пӗр совет ҫӗршывӗнче кӑна ӗҫҫыннисем пӗтӗмӗшпех тата вӗҫне ҫитийех демократиле правасемпе усӑ кураҫҫӗ.

Епӗ Националӑнӑҫсен Советне депутата суйлама пире телейлӗ те савӑнӑҫлӑ, пуйан та культурӑлӑ пурнӑҫ туса паракана, хамӑрӑн чи йуратнӑ ҫулпуҫӑмӑра, вӗрентекенӗмӗре, аттемӗре, тӗнчери ӗҫҫыннисен ҫулпуҫне—Иосиф Виссарионовича Сталина кандидата тӑратма сӗнетӗп. Епӗ шутлатӑп, пирӗн заводри рабочисем, служӑшчисем, инженерсемпе техникла работниксем епӗ сӗннӗ кандидатурӑна пӗр саслӑн хута кӗрӗҫ, тесе.

Сывӑ пултӑр пирӗн аслӑ та вӑйлӑ, никам ҫӗнтерейми социалисӑмла ҫӗршыв!

Сывӑ пултӑр пирӗн аслӑ Сталин

Ӑсран тухнӑ тесе шутланӑ ҫынсене суйлавҫӑсен спискисене кӗртес мар йӗрке ҫинчен

ССР Союзӗн Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитечӗ ӑсран тухнӑ тесе шутланӑ ҫынсене суйлавҫӑсен спискисене кӗртес мар йӗрке ҫинчен постановлени йышӑннӑ.

Ҫав постановлени тӑрӑх, „ССР Союзӗн Аслӑ Советне суйламали Положенин“ 9-мӗш статйи хушнипе, ӑсран тухнӑ тесе шутланӑ уйрӑм граждӑнсене суйлавҫӑсен спискисем ҫине кӗртес маррине, йе уйӑ пек ҫынсене суйлавҫӑсен спискисенчен кӑларассине ҫакӑн пек документсем пулсан ҫеҫ тумала:

судпа психиатрилӗ експертизӑн тивӗҫлӗ активсем тӑрӑх суд кӑтартса пани йе пригавӑр;

йе психиатрилӗ больницӑсенче тата колонисенче сывалма пурӑнакан ҫынсен спискисем, вӑл спискӑсене облӑҫсенчи (крайсенчи) йе хуласенчи сывлӑх пайӗсем тӑратмала.

Ӑсран тухнӑ тесе шутланӑ ҫынсен спискисене тивӗҫлӗ сывлӑх пайӗсем суйлавҫӑсен спискисене тӑвакан Советсем патне йараҫҫӗ.

Ӑсран тухнӑ уйрӑм ҫынсене суйлавҫӑсен спискисене кӗртмесӗр хӑварма ытти пур чухне те ҫав ҫынсене врач комиҫҫисем пӑхса тухни ҫинчен панӑ акт тӑрӑх ҫеҫ пултараҫҫӗ, вӑл комиҫҫисене, „ССР Союзӗн Аслӑ Советне суйламали Положенин“ 7-мӗш статйи тӑрӑх суйлавҫӑсен спискисене тӑвакан Советсем сӗннипе облӑҫсенчи (крайсенчи) йе хуласенчи сывлӑх пайӗсем тӗллесе лартаҫҫӗ.

ССР Союзӗн Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитечӗн постановленийӗ кӑтартса панӑ тӑрӑх, ҫав постановленире асӑннӑ ҫынсене суйлавҫӑсен спискисене кӗртмесӗр хӑварни ҫинчен йе суйлавҫӑсен спискисенчен кӑларса пӑрахни ҫинчен панӑ жалӑбӑсене „ССР Союзӗн Аслӑ Советне суйламали Положенин“ 16—19-мӗш статйисенче кӑтартнӑ йӗркепе татса параҫҫӗ.

ССР Союзӗн Сывлӑха сыхлав Халӑх Комиссарне ведомствӑри учреждениесене ССР Союз Тӗпӗҫтӑвкомӗн постановленийӗ тӑрӑх кӑтартусем пама хушнӑ.

„Н-209“ самольота шырама

„Палаткӑсем вырнаҫтарма тытӑннӑ“

(Фарих йулташ радиограмми)

Октаберӗн 25-мӗшӗнче Ҫурҫӗр тинӗҫ Флочӗн Тӗп Управленийӗнче „Н-213“ самольот ҫинчен летчик Фарих йулташран ҫакӑн пек радиограммӑ илнӗ:

„Н-211“, „Н-212“ тата „Н-213“ самолётсем метеорологилӗ питӗ начар ҫанталӑкра пилӗк сехет хушши вӗҫнӗ хыҫҫӑн, Франц Иосиф Ҫӗрӗн пӗр уҫӑ куполӗ ҫине анса ларнӑ.

„Н-213“ самольотӑн радисӗ Ковалевски йулташ чаплӑ ӗҫленипе пӗр татти-сыппиcӗр ҫыхӑну тытма тата метеорологилӗ сводкӑсем илме май пулчӗ. Пӗтӗм карапсен составӗсем сывӑ. Ҫӗр каҫма палаткӑсем вырнаҫтарма тытӑнтӑмӑр. Карапсен хатӗрӗсем лайӑх пӑхса упранипе пӗтӗмӗшпех йӗркелӗ.

Фарих“.

Сывлӑш експедицин иккӗмӗш вӗҫев отрйачӗн начальникӗ — Чухновски йулташ октаберӗн 25-мӗшӗнче ҫапла пӗлтернӗ: метеорологи тӗлӗшпе начар ҫанталӑк ӑна сурҫӗрелле вӗҫсе тухма кансӗрлет. Вӗҫме йурӑхлӑ ҫанталӑк пулсанах „Н-210“ самольот Тихайа бухтине вӗҫсе кайать. (ТАСС).

Барселонӑра каллех троцкисла-шпионла организаци тупса тытнӑ

ПАРИЖ. 24-X (ТАСС). Барселонӑран пӗлтернӗ тӑрӑх, унта каллех троцкисла-шпионла организаци тупса тытнӑ. Вӑл организацин йышӗнче нумайрахӑшӗ троцкиссен ПОУМ текен организацинче тӑракан елементсем пулнӑ. Троцкиссен ҫав хаяр тупса тытнӑ организацийӗ, Испанири пӑлхавҫӑсен тӗп штабӗ йертсе пынипе ӗҫлесе тӑнӑскер, Испани республикин пӗтӗм территоринче тымарсем йанӑ пулнӑ тата Перпиньйан хулинче (Франци) унӑн отделенийӗ пулнӑ.

Троцкисла организацири ҫынсене арӗслесен тата документсене тытса илсен, ҫав шпионла организаци пит хӑрушӑ ӗҫсем туса тӑни курӑннӑ.

Троцкиссен шпионла организацийӗ саботаж, диверсисем тунӑ тата правителствӑ членӗсемпе республикӑ ҫарӗн руководителӗсене хирӗҫ террорисла актсем тума хатӗрленнӗ.

Йапонцӑсем Китайӑн лӑпкӑ хулисем ҫине бомбӑсем пӑрахаҫҫӗ

НАНКИН, октаберӗн 24-мӗш (ТАСС). Октаберӗн 24-мӗшӗнче Йапони самольочӗсем Сӳйчжоупа Хайчжоу хушшинчи сурсул ҫинче ларакан Синончен йатлӑ пӗчӗк йал ҫине икӗ хут бомбӑсем пӑрахнӑ. Йалта вилнисем нумай пулнӑ.

Йапонин 30 самольочӗ Кантон—Ханькоу, Кантон—Коулун тата Синин чукунҫулӗсем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ. Виҫҫ ҫулӗ ҫинче те сийен тунӑ. Октаберӗн 24-мӗшне каҫхине йапонцӑсем Ханькоу ҫине пирвайхи хут сывлӑшран тапаннӑ. Октаберӗн 24-мӗшӗнче ирхине Ханькоу ҫине иккӗмӗш хут бомбӑсем пӑрахнӑ.

Националӑнӑҫсен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен ЧАСС Республикӗнчи Суйлав Комиҫҫи

ПӖЛТЕРНИ

Националӑнӑҫсен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен ЧАСС Республикӗнчи Суйлав Комиҫҫин адресӗ ҫапла: Шупашкар хули, Чувашскайа урамӗ, 6 № ҫурт, 2-мӗш хутлӑх (Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитетпа Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн ҫурчӗ). Телефонсем: 0, 01, 0—02 тата 5—24.

Националӑнӑҫсен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Ҫӗмӗрле Округ Суйлав Комиҫҫи

ПӖЛТЕРНИ

Националӑнӑҫсен Советне Суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Ҫӗмӗрле Округ Суйлав Комиҫҫи адресӗ ҫапла: Ҫӗмӗрле хули, Ленин урамӗ, Горпо Правлени ҫурчӗ, сӳлти хутлӑх. Телефонсем: 40 тата 44.

Ответлӑ редактӑр
П. И. ИВАНОВ.

Манчжурири лару-тӑру

Йулашки вӑхӑтра Манчжурире лару-тӑру питех те йӑварланса пырать. Нумайах та пулмасть, Йапони Манчжурири салтаксене, чукунҫул ҫинче ӗҫлекенсене хӑй Ҫурҫӗр Китайра туртса илнӗ чукунҫулсем ҫине ӗҫлеме йарса тӑнӑ. Халӗ салтаксене те, чукунҫул ҫинче ӗҫлекенсене те, Ҫурҫӗр Китайа йама чарнӑ, унччен йанисене теваскасах кайала, Манчжурине илсе килме тытӑннӑ. Ҫак факт Манчжурире Йапонийе хирӗҫле йухӑм никӑҫанхинчен ытла вӑйланса кайнине пӗлтерет.

Чӑн та, Йапонийе хирӗҫле кӗрешӳ Манчжурире никӑҫанхинчен ытла вӑйланса пырать. Ҫак йухӑм Йапони Китай ҫине тапаннӑ хыҫҫӑн ҫӗнӗрен ҫӗкленсе кайнӑ. Йапони пусмӑрӗ ҫине тарӑхнӑ Китай ҫарӗсем паттӑрӑн ҫапӑҫнипе хавхаланса Манчжури халӑхӗн сарлака массийӗ Йапонийе хирӗҫ алла хӗҫпӑшал илсе ҫапӑҫма тытӑнать. Манчжурире пур ҫӗрте те Йапонийе хирӗҫле партизансен отрйачӗсем нумайланса пыраҫҫӗ.

Тӗнчери хаҫат-журналсем Манчжоу-Го ҫарӗнче массӑлӑ восстанисем пуҫланса кайни ҫинчен ҫырса пӗлтереҫҫӗ. Йапони империалисӑмӗ Манчжурире 100 пин салтакран тӑракан ҫар тытать, вӑл ҫак пысӑк ҫарпа Манчжурири партизанла йухӑма пӗтерме, шалти Монголине тата Китайа туртса илнӗ ҫӗрте усӑ курма шутланӑ. Халӗ ӗнтӗ Йапони правителствин ҫак плана ирӗксӗрех прахӑҫа кӑлармa тивет.

Иртнӗ ҫулсенче те Манчжури ҫарӗнче восстанисем час-часах пулнӑ. Ҫарӑн уйрӑм пайӗсенчи салтаксем хӑйсен офицерӗсене йапонцӑсене, вӗлерсе, тупӑсене тата ытти хӗҫпӑшалсене илсе партизансен йенне кусна. Ҫурҫӗр Китайра вӑрҫӑ пуҫланса кайсан, Манчжури ҫарӗнче восстанисем пуласси ӳснӗ. Йапони пусмӑрне хирӗҫ батальйонсем тата полксем восстани тунисем, партизансем йенне куҫнисем пур. Англири Рейтер телеграф агентстви ҫырса пӗлтернӗ тӑрӑх, Йапонине хирӗҫ кӗрешекен Манчжурири партизансен отрйачӗсенче 100 пин боец шутланать. Анчах ку цифар тата пысӑкраххи ҫинчен нимӗн иккеленмели те ҫук.

Йапони правителстви Манчжурири хаҫат-журналсене Йапонийе хирӗҫле йухӑм ӳссе пыни ҫинчен ҫырма чарнӑ. Харбин хулинчен Дайрен хулине кайакан Йапони пойӗсӗ ҫине ийулӗн 21-мӗшӗнче партизансем тапаннӑ. Ҫакӑн ҫинчен хаҫат-журналсем ҫине пӗр сӑмах та ҫырма хушман. Ҫентабӗр уйӑхӗнче ҫак саккуна пӑрахӑҫа кӑларсан ҫеҫ, Манчжури хаҫачӗсем ҫав факт ҫинчен ҫырса пӗлтерчӗ. Анчах та Манчжури партизанӗсем Йапонийе хирӗҫ паттӑрӑн ҫапӑҫнин нумай факчӗсене ҫырса пӗлтермесӗр пытарса хӑвараҫҫӗ.

Йапонийе хирӗҫле йухӑм вӑйлӑн сарӑлса пырать. Ҫентабӗр уйӑхӗн пуҫламӗшӗнче Англире тухса тӑракан „Манчестер Гардиен“ хаҫат Йапони Манчжурире питӗ пысӑк йӑварлӑх чӑтать, тесе ҫырса пӗлтернӗ. Йапони влаҫӗсем Манчжурири ӗҫсене пытарма хӑтланаҫҫӗ пулсан та, Мукден хули сывӑхӗнче тӑракан Манчжури салтакӗсен икӗ батальйонӗ восстани тунӑ. Ҫавӑн пекех Жехе провинцинчи ҫарта та восстанисем пулса иртнӗ. Ҫак хаҫат Мукден хули сывӑхӗнче Йапони ҫарӗсемпе Манчжури ҫарӗсем хушшинче чӑн-чӑн вӑрҫӑ пулса иртнӗ, вӑрҫӑра икӗ йенӗн те вилнисемпе суранланнисем нумай пулнӑ, тесе ҫырса пӗлтернӗ. „Таймс“ Чжанбее хулинче тӑракан Манчжури ҫарӗн пӗр полкӗ пӗтӗм хӗҫпӑшалне илсе партизансен отрйачӗсен йенне куҫни ҫинчен те ҫырса пӗлтернӗ.

Манчжурин центӑрӗнче йапонцӑсем чылай ҫирӗппӗн вырнаҫнӑ пулин те, Йапонийе хирӗҫле халӑх йухӑмне нийепле те чарма пултараймаҫҫӗ.

Ҫентабӗр уйӑхӗнчех Манчжурин Мишане районӗнче партизансемпе Йапони ҫарӗсем хушшинче пысӑк ҫапӑҫу пулса иртнӗ. Ҫак ҫапӑҫура Йапони ҫарӗн салтаксем нумай вилсе пӗтнӗ. Кунсӑр пуҫне Хокон, Окома капитансем, подпоручик Катаэпра, офицерсем Нидзума вилнӗ. Ҫакнашкал ҫапӑҫусем йулашки вӑхӑтра нумайланнӑҫем нумайланса пыраҫҫӗ. Вӗсем ҫинчен Йапони хаҫачӗсем те ҫырмасӑр тӑма пултараймаҫҫӗ.

Йапони империалисӑмӗ Манчжурине хӑйӗн лӑпкӑ „тылӗ“ тесе шутланӑ. Халӗ ӗнтӗ вӑл лӑпкӑ тыл мар, Йапони империалисӑмне хирӗҫ ҫӗр пинлӗ ҫар ҫапӑҫать. Ку йухӑм, партизансен йухӑмӗ, куллен ӳссе пырать.

„Чӑваш Коммунӗ“ ҫыранса илмели хаксем; 12 уйӑха—30 т., 6 уйӑха—15 т., 3 уйӑха—7 т. 50 пус, 1 уйӑха —2 т. 50 пус. Алҫырӑвсене кайала памаҫҫӗ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 808. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашгиз. Заказ № 1923. Тираж 11156. ф. 58—92 см. 1—1 п. л.